25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 АПРЕЛЬ 14 ЫТЛАРИКУН 87(6022) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăларасси çинчен

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ ЙЫШĂННĂ ПОСТАНОВЛЕНИ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăна çыхăнса тăракан мероприятисем валли укçа-тенкĕ парса тăма çĕнĕ средствăсем хутшăнтарас шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне 10 миллиард тенкĕлĕх, 20 çуллă срокпа кăларас.

2. Заем облигацийĕсене гата вĕсен доходĕсене,—ку хисепе выигрышсем те кĕресçĕ,—государство тата вырăнти налогсемпе сборсем хурассинчен хăтарас.

3. ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ тăратнă Условисене, Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăлармалли Условисене çирĕплетес.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1942 çулти апрелĕн 13-мĕшĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1942 çулти апрелĕн 13-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне кăлармалли

УСЛОВИСЕМ

1. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемĕ икĕ кăларăмран тăрать: выигрышла тата процентлă кăларăмсем.

Заемăн выигрышлă кăларăмне халăх хушшинче сарма тăларăă. Заемăн процентлă кăларăмне ялхуçалăх артелĕсене, промысла артельсене, промысла тата ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен артельсене, инвалидсен кооперацин, вăрман кооперацин артелĕсене тата çĕре пĕрлешсе ĕçлекен юлташлăхĕсене вырнаçтарассĕ.

Выигрышлă кăларăм облигацийĕсенчен илнĕ пĕтĕм тупăша выигрышсем тăрăх тÿлессĕ, процентлă кăларăм тăрăх илнĕ тупăша купонсем çине процентсем тăрăх тÿлессĕ.

I. ВЫИГРЫШЛА КАЛАРАМ

2. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемĕн çирĕм çуллăх срокĕ 1942 çулти сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланса 1962 çулти сентябрĕн 1-мĕшĕнче пырать.

3. Заемăн выигрышлă кăларăмĕ разрядсем çине пайланать, кашни разрядра 100-шер миллион тенкĕ пулать.

Кашни разряд 20.000 серирен тăрать. Кашни разрядри серисен номерĕсем 00001 пуçласа 20.000 çити пулассĕ.

Кашни серире облигацисем 1-мĕш номертен пуçласа 50-мĕш номере çити пулассĕ.

4. Заемăн выигрышлă кăларăмĕ тăрăх облигацисене 200, 100, 50, 25 тата 10 тенкĕлĕх кăларассĕ.

5. 200 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири 100 тенкĕ тăракан тиллĕх облигацирен тăрассĕ, вĕсен тиллĕх номерĕсем пулать, вĕсен тăрăх тухнă выигрышсем пулать, 200 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири 100 тенкĕ тăракан икĕ облигацирен тăрассĕ, вĕсен икĕ номер пулать, вĕсем тăрăх [illegible] тухма пултарать. Выигрышсем облигацирен кăларнине тата кашни номер çине пĕр хăйтарран выигрыш тÿлеççĕ.

50, 25 тата 10 тенкĕ тăракан облигацисем 100 тенкĕ тăракан облигацисен пайĕсем пулса тăраççĕ тата 100 тенкĕ тăракан облигацин çине тухнă выигрышăн тивĕçлĕ пайне ($^1/_2$, $^1/_4$, $^1/_{10}$ пайне) илме право параççĕ.

Асăрхаттарни: 25 тата 10 тенкĕ тăракан облигацисене вĕсенчен хăлăрах тăракан облигацисем парса подписчиксене расчет туса пама ыйă сук чухне тата машшăн çеç кăлараççĕ.

6. Заемăн выигрышлă кăларăмĕ тăрăх 50.000, 25.000, 10.000, 5.000, 1.000, 500 тата 200 тенкĕ тăракан выигрышсем пулассĕ, кунта облигаци хакĕ те (çĕр тенкĕ) кĕрет.

Заемăн çирĕм çуллăх срокĕ хушшинче [illegible] выигрыш тухнă облигацине [illegible].

Выигрыш тухнă облигацине ухçа тÿлесе илмелле.

7. Çирĕм çуллăх срокра выигрышлă кăларăм тăрăх тираж [illegible].

Выигрышсен пĕтĕм сумми заемăн [illegible].

8. Выигрышсене кашни тиражра выигрышлă кăларăмăн кашни разрядĕ çине, кашни 100 миллион тенкĕ çине çакăн чухлĕ выигрыш тухмалла:

Выигрышсен мысăкăшĕ тенкĕпе, облигацисен хакне те кĕртсе	Выигрышсен хисепĕ: 1—10-мĕш тиражсенче кашнинче пулать	11—20-мĕш тиражсенче кашнинче пулать	21—30-мĕш тиражсенче кашнинче пулать	31—40-мĕш тиражсенче кашнинче пулать	Пĕтĕмĕпе 40 тиражра кашни 100 миллион тенкĕ çине пулать
50.000	1	1	1	1	40
25.000	2	2	2	2	80
10.000	5	5	5	5	200
5.000	10	10	10	10	400
1.000	100	100	100	100	4.000
500	1.000	1.000	1.000	1.000	40.000
200	7.507	7.257	7.000	6.757	285.280
Кашни тиражри выигрышсен пĕтĕм хисепĕ	8.625	8.375	8.125	7.875	330 000
Кашни тиражри выигрышсен пĕтĕм сумми (тенкĕпе)	2.301.400	2.251.400	2.201.400	2.151.400	89.056.000

9. Выигрышлă заемăн вылеса илмен облигацийĕсем 1947 çулти сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 15 çул хушши, заем срокĕ тухичен, хăйсен хакĕ тăрăх укçа тÿлесе каялла илессĕ.

Заемăн выигрышлă кăларăмĕн кашни 100 миллион тенкинчен: 1947—1952 çулсенче кашни çулах 2.500.000-шер тенкĕлĕх, 1953—1957 çулсенче 4.200.000-шер тенкĕлĕх, 1958—1962 çулсенче кашни çулах 6.200.000-шер тенкĕлĕх каялла илессĕ.

Выигрышлă кăларăмăн 1947—1961 çулсенче каялла тÿлесе илме тивĕçлĕ облигацийĕсене кашни çул пулса иртекен тиражсенче палăртассĕ; каялла тÿлесе илес тĕлĕшпе тиражсем иртермелли срокĕсене ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ палăртать.

Каялла илмелли тиражсене пулман облигацисене 1962 çулти сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тÿлесе илессĕ.

10. Выигрыш тухнă облигацийĕсене, çавăн пекех тата хăйсен хакĕ тăрăх каялла тÿлесе илме тивĕçлĕ облигацийĕсене 1963 çулти сентябрĕн 1-мĕшчен парса вĕсемшĕн укçа илме пулать; çак срок иртнĕ хыççăн вара укçа илме ыйтса паман облигацисем хăйсен вăйне çухатассĕ тата вĕсемшĕн укçа тÿлемессĕ.

II. ПРОЦЕНТЛА КАЛАРАМ

11. Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемĕн процентлă кăларăмĕн çирĕм çуллăх срокĕ 1943 çулти февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçланса 1963 çулти февралĕн 1-мĕшчен пырать.

12. Заемăн процентлă кăларăмĕ разрядсем çине пайланать, кашни разрядра 100 миллион тенкĕ пулать.

Кашни разряд 20.000 серирен тăрать. Кашни разрядăн серийĕсем 00001 пуçласа 20.000 çити пулассĕ.

Кашни серири облигацисем 1-мĕш номертен пуçласа 50-мĕш номере çити пулассĕ.

13. Заемăн процентлă кăларăмĕ тăрăх 1.000, 500 тата 100 тенкĕлĕх облигацисем пулассĕ.

1000 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серирен 100 тенкĕ тăракан 10 облигацирен тăрассĕ, вĕсен 10 номер пулать, вĕсен пĕтĕм хакĕ тăрăх процент шучĕпе доход илме пулать, 500 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири 100 тенкĕ тăракан пилĕк облигацирен тăрассĕ, вĕсен 5 номер пулать, вĕсен пĕтĕм хакĕ тăрăх процент илме пулать.

14. Процентлă кăларăм облигацийĕсем тăрăх пулнă тупăша çулталлăкра пĕр хут купонсене 2 процент чухлĕ тÿлессĕ. Купонсем тăрăх тÿлемелли срокĕсем 1944 çулти февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кашни çулах февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçланассĕ.

15. Процентлă кăларăмăн облигацийĕсене 1958 çулти февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пилĕк çул хушши çулсерен пĕрпек пайсемпе тÿлесе каялла илессĕ.

1958—1962 çулсенче каялла тÿлесе илмелли облигацийĕсене каялла илес тĕлĕшпе кашни çулах пулакан тиражсенче палăртассĕ, вăл тиражсене кашни çулах февралĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр иртерессĕ.

Каялла илмелли тиражра пулман облигацисене 1963 çулти февралĕн 1-мĕшĕнче тÿлесе илессĕ.

Тÿлесе илнĕ чухне облигаци хуçисене облигацин хакне тÿлессĕ.

Каялла илмелли тиражра пулнă облигацисемшĕн купон тăрăх тираж пулнă çулти февралĕн 1-мĕш таран тÿлессĕ. Ун хыççăнхи купонсемшĕн тÿлемессĕ.

16. Процентлă кăларăмăн тÿлесе илме тивĕçлĕ облигацийĕсене, çавăн пекех срок çитнĕ купонсене те, укçа илме 1964 çулти февралĕн 1-мĕшчен пама пулать. Çав срок иртсен вара укçа каялла илме паман облигацисемпе купонсем хăйсен вăйне çухатассĕ тата вĕсемшĕн укçа тÿлемессĕ.

ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарĕ А. ЗВЕРЕВ.

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне илмесĕр пĕр ĕççынни те ан юлтăр!

Военнăй Заема колхозниксем 3—4-шар пин тенкĕлĕх çырăнаççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. Апрелĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). СССР Совнаркомĕ «Государствăн 1942 çулти военнăй заемне кăларасси çинчен» йышăннă постановлене радио тăрăх итленĕ хыççăнах районри колхозсенче ăна çырăнса илес ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Кзыл-Чишмери «Маяк» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 100 пин тенкĕлĕх çырăнса илчĕç. Вăл шутран укçине çийĕнчех 96 пин тенкĕ тÿлерĕç.

Çĕнĕ заема çырăнса унăн укçине тÿлес тĕлĕшпе колхозри активистсем лайăх пример кăтартаççĕ. Колхоз председателĕ коммунист Минаев юлташ заема 4 пин тенкĕлĕх, 50 çулти колхозник И. Сабируллин, 4-мĕш бригадăн бригадирĕ Ахсянов юлташсем 1.500-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине шĕтĕмпех тÿлесе татрĕç.

Кÿрпĕрри «Кзыл Тан» колхозра та заема пысăк ăнăçлăхпа вырнаçтараççĕ. Колхоз председателĕ Камалов юлташ заема 2.500 тенкĕлĕх, колхозник-активист Валитов юлташ 1.500 тенкĕлĕх, звеньевая М. Шарафутдинова юлташ 1000 тенкĕлĕх çырăннă. Вĕсем укçине те çавăнтах тÿлесе татнă. Ку колхозра çĕнĕ заема пурĕ 26 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

«Хĕрлĕ Паттăр», «Звезда», Чкалов ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем те Государствăн 1942 çулти военнăй заемне хавасланса çырăнаççĕ.

Çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекен служащисемпе трактористсем хушшинче те ăнăçлăн иртрĕ. МТС коллективĕ çĕнĕ заема пĕр самантра 21.720 тенкĕлĕх çырăнса илчĕ. Вăл шутран 6.240 тенкĕ укçине пухса пачĕç.

МТС-ра малта пыракан трактористсенчен Г. Халиуллин юлташ çĕнĕ заема 800 тенкĕлĕх, бригадирсенчен И. Титовпа Е. Зимцов юлташсем 1.500-шер тенкĕлĕх, Соловьев юлташ 1000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çавăнтах парса татрĕç.

Заема çырăнса илес ĕç район центрĕнчи ытти учрежденисемпе предприятисенче те анлăн сарăлса пырать.

П. НИКОЛАЕВ.

Правительствăн постановленине пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç

Ĕнер, ĕç пĕтнĕ хыççăн, Чăваш АССР Çĕр ĕç Халăх Комиссариачĕнче ĕçлекенсем пухăва пухăнчĕç. Пухура пĕр ыйту: Учреждение тасалăхпа йĕркелĕх тăвасси çинчен пулчĕ. Пуху пынă вăхăтра радио калаçма тытăнчĕ. Радио тăрăх диктор пирĕн правительство «1942 çулти военнăй заема» кăларма йышăннă постановление вулама пуçларĕ. Партипе правительствăн постановленине пуху тимлĕн итлесе тăчĕ.

Çĕр ĕç работникĕсем партипе правительство государствăн 1942 çулти заемне кăларма йышăннă постановление хавхаланса кĕтсе илчĕç, кĕске вăхăт хушшинчех пухури 93 работник çĕнĕ заема пĕр кăмăллăн çырăнса 48.100 тенкĕлĕх сарчĕç. Заема сарас ĕç малалла пырать.

Я. ПЕТРОВ.

* * *

Государствăн 1942 çулти военнăй заемне çырăнас ĕç «Заготскот» коллективĕнче ăнăçлăн иртрĕ. Межрайконторăн Шупашкарти коллективĕ çĕнĕ заема 4.680 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Заем çырăннин çак сумми коллективăн уйăхри ĕçукçи фончĕн 120 процентĕнчен иртет.

Çĕнĕ заем тухнă ятпа пулнă митингра межрайконтора базин заведующийĕ И. Деветьев юлташ çапла каларĕ:

— Сыхçисен Гитлер çил акрĕ пулсан, çил тăвăл вырса илтĕр. Хĕçпăшалсем нумайрах туса кăларас тесе, Гитлерпа унăн шайкисене тĕппипех пĕтерес тесе, эпир заема хавасланса çырăнатпăр. Манăн уйăхри ĕçукçи 450 тенкĕ, çĕнĕ заема эпĕ 600 тенкĕлĕх çырăнатăп.

И. Деветьев юлташран пример илсе, ытти служащисемпе рабочисем те çĕнĕ заема уйăхри ĕçукçинчен ытларах çырăнчĕç. Бухгалтер К. Львова юлташ (унăн упăшки фронтра çапăçать) заема 400 тенкĕлĕх, финанспа план отделĕн начальникĕ В. Меркулов юлташ 700 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Львов, Капитонов, Ильин рабочисем те çĕнĕ заема хăйсен уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнчĕç.

ЯДУКОВ.

* * *

Уполнаркомзагăн республикăри конторинче ĕçлекенсем çĕнĕ заема пурте пĕр çын пек пулса çырăнса илчĕç. Вĕсен уйăхри ĕçукçин фончĕ 7.840 тенкĕ шутланать, çĕнĕ заема 10.350 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Соловьева, Мефодьева сотрудницăсем çырăннин сумми уйăхри ĕçукçи фончĕн 150 процентне çитет.

1942 çулти Çуракине вăхăтра иртерес тĕлĕшпе тумалли мероприятисем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Çуракине тухасчен шутлă кунсем çеç юлчĕç пулин те, хăшпĕр районсем, сăмахран, Кувакино, Çĕмĕрле районĕсем тата Çĕрпÿ, Красноармейски МТС-сем тата республикăри ытти районсенчи чылай колхозсем çуракине иртерме хатĕрленсе çитмен-ха. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене çакăн çине çавăрăнса пăхма хушаççĕ: кăçалхи çуракине кĕске срокcенче иртерни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать, çавăн пек тусан çеç пур культурăсем енĕпе те пысăк тухăçлăх илме пулать тата çĕршыва Хĕрлĕ Çара кирлĕ чухлех ялхуçалăх продукчĕсем туса пама пулать. Кăçал çуркунне каярах юлса килни те çуракине кĕске срокра туса иртерме хушать.

Райсовет исполкомĕсен председателĕсене, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата колхозсен председателĕсене Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ иртнĕ çулта пулнă пысăк йăнăшсене тумалла марри çинчен асăрхаттараççĕ. Пĕлтĕр Первомайски, Йĕпреç тата Кувакино районĕсенчи чылай колхозсенче тырпулсене кая юлса акнă пирки вĕсем пулса çитеймерĕç, савна пула тырпулăн пĕр пайĕ çухалса юлчĕ.

Çурхи уйхир ĕçĕсене вăхăтра туса иртерес шутпа, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Райсоветсен исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене колхозсемпе совхозсенче ир пулакан тĕштырă культурисене 10 ĕçкунĕ хушшинче акса пĕтерессине пурнăçа кĕртме хушас.

Çурхи суха ĕçне кая хăвармалла мар тата сухалассипе сÿрелес ĕçе, тăпрана типĕтсе ярас мар тата унта нÿрлĕхе сыхласа хăварас тесе, умлă-хыçлăнах туса иртермелле.

2. Техника енĕпе çитменлĕхсем пулнă пирки тракторсем хирте ĕççĕр тăрасси ан пултăр тесе, тракторсем талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлемелле тăвас тата вĕсен пĕтĕм пултарулăхĕпе усă курас шутпа, Наркомзема Малов юлташа, Çĕр ĕç Халăх Комиссариачĕн политсекторне — Чернов юлташа, МТС-сен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсене çапла тума хушас: МТС-сенче кашни 15—20 трактор пуçне тухса çÿрекен пĕр механик пулмалла, бригадăсенче кирлĕ чухлĕ запаслă пайсемпе инструментсем пулмалла, кашни 15—20 трактор пуçне автомашинăпа е лашасемпе куçса çÿрекен пĕр мастерской организацилемелле.

3. Колхозсене çапла тума хушас: колхозăн турттăм вăйĕпе усă курса суха, сÿре, ака ĕçне тăвакан тата кашни кунхи ĕç нормине малтанхи ултă ĕçкунĕ хушшинче пĕтĕмпех тултарса пынă колхозниксене ĕçкунĕсем икĕ хут ÿстерсе çырса памалла, ун хыççăнхи 5 кун хушшинче те нормăна тултарса пынă колхозниксене 1,5 хут ÿстерсе ĕçкунĕсем çырса памалла.

4. Çураки вăхăтĕнче колхозсен лашисене (государство тыррине инçетрен турттарса тухас тĕлĕшпе ирттерекен трудгужповинноçсăр пуçне) трудгужповинноçран хăтарас, уйрăмăнах начарланса кайнă лашасене вăйлă апат çиме тăратмалла тăвас.

5. Çуракине вăхăтра тата кĕске срокcенче иртерес шутпа, колхозсене, МТС-сене тата совхозсене 1942 çулти çуракинче çумкурăкĕнчен таса çĕрсене сухаланă чухне, тракторпа тата лашапа ĕçлемелли плугсемсĕр пуçне, нумай касăллă плугсемпе тата лущильниксемпе усă курма ирĕк парас, вĕсемпе çуртырисене тата курăксене акмалли çĕре 12—14 сантиметр тарăнăшĕнчен кая мар сухалемелле. Çумкурăклă çĕрсене обязательнăй йĕркепе тракторпа е лашапа ĕçлемелли плугсемпе норма тăрăх кăтартнă чухлĕ тарăнĕш сухаламалла. Пропашной тата техникăллă культурăсем акмалли çĕрсене çуркунне норма тăрăх кăтартнă тарăнăшех сухаласа хăвармалла. МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата колхозсен председателĕсене çуркунне çĕре ĕçлесе хатĕрлес йĕркене тата участоксене халех палăртса хума хушас.

6. Колхозсене, совхозсене тата МТС-сене сухалассипе сÿрелесси хушшинче вăхăт иртмелле мар тума хушас, çавăнпа та плугсемпе сÿресене пĕрле кăкарса пĕр вăхăтрах сухаламалла тата сÿрелемелле тăвас шулать. Чăваш АССР Наркомземне, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çапла тума хушас: сухалассипе сÿрелессине пĕр вăхăтрах тата лайăх пахалăхпа тăвакан трактористсене сухаланипе сÿреленине уйрăмăн шута илсе тÿлемелле, çавăн пекех тата пĕр вăхăтрах сухаласа тата сÿрелесе горючие перекетленĕшĕн премии памалла.

7. Колхозсемпе совхозсене çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланас умĕн уйхирсенчен улăмсемпе хăмăлсене пухса татсатма тата кирлĕ чухне хăмăлсемпе çумкурăкĕсене çунтарса ярас ĕçе туса иртерме хушас. Пĕтĕм çĕр лаптăкĕ типсе çитессе кĕтмесĕр, уйрăм участоксем типнĕ майĕн вĕсене суйласа илсе сухаламалла, сÿрелемелле тата акмалла, суйласа илсе акас ĕçре тракторсемпе тата лашасемпе усă курмалла.

8. МТС-семпе совхозсен директорĕсене, урапаллă тракторсем уйхир ĕçне иртерех тухчăр тесе, урапаллă тракторсем çумне уширительсем майлаштарса лартма хушас.

Тракторсен бригадисене куçса çÿрекен будка-вагонсем, çавăн пекех тата тракторсем валли сухаланă вырăнпа горючипе çĕрмелли сем турттаракан урапасем памалла, газогенераторнăй тракторсем валли чуркăсене турттарса ыма тата вĕсене сыхласа усрама витнĕ бестаркăсем памалла.

9. Машинно-тракторнăй станцисем ĕçе вăхăтра тумасăр çуракине вăраха ярасçĕ пулсан, ака ĕçне хăвăртлатас шутпа, тракторсемпе ĕçleme уйăрнă çĕр лаптăкĕсене лашасемпе ĕçлесе акма колхозсене ирĕк парас. Тăпра нÿрĕ пирки сеялкăсемпе усă курма май çук чухне е МТС-ри тата колхозри сеялкăсен хисепĕ ир акмалли тĕштырă культурисене палăртнă срокра акма май паман чухне, çав культурăсене колхозсем алăпа акма пултараççĕ, çакăн чухне вара акмалли нормăна тивĕçлĕ чухлĕ ÿстермелле.

10. Нумай çул ÿсекен курăксем акнă çĕр лаптăкĕсене, унта курăксем лайăх ÿсоççĕ пулсан, виççĕмĕш тата тăватăмĕш çул усă курма сухаламасăр хăварма колхозсемпе совхозсене ирĕк парас, çакна май вара çав колхозсемпе совхозсен пĕр çул ÿсекен курăксене акас плана тивĕçлĕ чухлĕ чакармалла.

11. МТС-сем, совхозсем тата колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеме районсене Совнаркомăн, ВКП(б) Обкомĕн тата Наркомземăн работникĕсене командировкăна ярас.

Райсоветсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене икĕ кунлă срокра партипе совет районри активне колхозсене, совхозсене тата тракторсен бригадисене командировкăна яма хушас. Вĕсен, МТС-семпе совхозсен политотделĕсемпе, ялсенчи партипе комсомол организацийĕсемпе тата колхозри активпа пĕрле, кашни трактор тата ун çумне кăкарса ĕçлемелли инвентарь хатĕррине тĕрĕслемелле, трактор бригадисене трактористсем, бригадирсем тата прицепщиксем парса çитерниие, тракторсене ĕçре пулăшма ялан ĕçлекен колхозниксем уйăрса панине, колхозсенче вăрлăхсем хатĕррипе хатĕр марине, турттăм вăйĕ тата лашапа ĕçлемелли инвентарьсем уйхир ĕçне тума хатĕррипе хатĕр маррине тĕрĕслемелле, тĕрĕсленĕ вăхăтра çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пымалла.

Райсоветсен исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене икĕ кунлă срокра хăйсен заседанийĕсенче çак решение сÿтсе явма, кашни уйрăм колхозра çуракине вăхăтра иртерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ çапла шутлаççĕ: ялсенчи коммунистсемшĕн, комсомолецсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн, МТС-семпе совхозсенчи работниксемшĕн çуракине вăрçă вăхăтĕнчи пек иртерме пĕтĕм вăя мобилизацилениинчен хисеплĕрех те кирлĕрех задача халĕ урăх çук.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 12-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 11-мĕшĕнче противникăн 5 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 11-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен темиçе танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине, 30 яхăн полевой тата зенитнăй орудисене, 30 минометне, пулеметсен 20 точкине пĕтерсе тăкнă.

Вĕçĕ 4-мĕш страницăра

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ

Наукăра питех те палăрса тăракан ĕçсем тунăшăн Сталинла премисем парасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çулта наукăра питех те палăрса тăракан ĕçсем тунăшăн Сталинла премисем парасси çинчен 1939 çулти декабрĕн 20-мĕшĕнче тата 1942 çулти январĕн 11-мĕшĕнче йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртес майпа СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

Питех те палăрса тăракан научнăй ĕçсемшĕн Сталинла премисем çаксене памалла тăвас:

е) физикăпа математика наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ премി — 200.000 тенкĕлĕх

1. Сергей Натанович **Бернштейна**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, математика енĕпе тунă: «О суммах зависимых величин, имеющих взаимно почти нулевую регрессию», «О приближении непрерывной функции к линейным дифференциальным операторам от многочлена» тата «О доверительных вероятностях Фишера» ятлă научнăй ĕçсемшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскерсемшĕн.

2. Абрам Федорович **Иоффене**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, Ленинградри физико-техническии институтăн директорне, полупроводниксем енĕпе туса ирттернĕ тĕпчевсемшĕн. Çав тĕпчевсен итогĕсене 1940 çулăн вĕçĕнче «Полупроводники в физике и технике» ятлă ĕçре пичетлесе кăларнă.

3. Леонид Исаакович **Мандельштама** тата Николай Дмитриевич **Папалексине**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членĕсене, колебанисен тата радиохумсен сарăлнин теорийĕ енĕпе тунă научнăй ĕçсемшĕн: «Интерференционные методы исследования распространения радиоволн и их применение» ятлă ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн, тата «Об одном варианте интерференционного метода исследования распространения радиоволн» ятлă ĕçшĕн, 1940 çулăн вĕçĕнче пичетлесе кăларнăскершĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Александр Данилович **Александрова**, Ленинградри Государственнăй университетăн профессорне, «Существование выпуклого многогранника и выпуклой поверхности с заданной метрикой» тата «Внутреняя геометрия произвольной выпуклой поверхности» ятлă научнăй ĕçсемшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскерсемшĕн.

2. Владимир Дмитриевич **Кузнецова** тата Мария Александровна **Большанинăна**, Томскри В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан Государственнăй университетăн профессорĕсене, «Физика твердого тела» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

б) Техникăллă наукăсем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми — 200.000 тенкĕлĕх

1. Борис Григорьевич **Галеркина**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, «Теория упругого равновесия цилиндрических оболочек» ятлă темăпа тунă пурнишĕн те паллă тĕпчевсемшĕн. Çав тĕпчевсем «Напряжения и перемещения в круговом цилиндрическом трубопроводе» ятлă ĕçре, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскерре, вĕçленеççĕ.

2. Сергей Алексеевич **Христиановича**, СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспондентне, Жуковский ячĕпе тăракан Центральнăй аэрогидродинамически институтăн сотрудникне, «Обтекание тела газом при больших дозвуковых скоростях», «Влияние сжимаемости на характеристики профилия крыла», «О сверхзвуковых течениях газа» ятлă научнăй ĕçсемшĕн, 1940 çулăн вĕçĕнче тата 1941 çулта пичетлесе кăларнăскерсемшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 100.000 тенкĕлĕх

1. Мстилав Всеволодович **Келдыша**, профессора, тата Евгений Павлович **Гроссмана**, техникăллă наукăсен кандидатне — Жуковский ячĕпе тăракан Центральнăй аэрогидродинамически институтăн сотрудникĕсене, самолетсен сывлăшра арканса каясран сыхланас тĕлĕшпе тунă научнăй ĕçсемшĕн: «Расчет самолета на флаттер» ятлă ĕçшĕн, 1940 çулăн вĕçĕнче пичетлесе кăларнăскершĕн; «Колебания крыла с упруго прикрепленным мотором» тата «Изгибно-элеронный флаттер» ятлă ĕçсемшĕн, 1941 ç. пичетлесе кăларнăскерсемшĕн.

в) Хими наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—200.000 тенкĕлĕх

1. Николай Дмитриевич **Зелинские**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, органикăллă хими енĕпе питех те палăрса тăракан научнăй ĕçсем тунăшăн, вĕсене 1941 çулта авторăн суйласа илнĕ ĕçĕсен сборникĕсенче пичетлесе кăларнă.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 100.000 тенкĕлĕх

1. Илья Васильевич **Гребенщикова** СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, Государственнăй оптически институтăн лабораторин начальникне, оптика енĕпе оборона ĕçĕнче питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан научнăй ĕçсемшĕн.

2. Петр Александрович **Ребиндера**, СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспондентне, «Значение физико-химических процессов при механическом разрушении и обработке твердых тел в технике» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1940 çулăн вĕçĕнче пичетлесе кăларнăскершĕн, тата «Облегчение деформации металлических монокристаллов под влиянием адсорбции поверхностно-активных веществ» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

г) Геологипе географи наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми — 200.000 тенкĕлĕх

1. Александр Евгеньевич **Ферсмана**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, СССР Наукăсен Академийĕн геологи наукисен институчĕн директорне, «Полезные ископаемые Кольского полуострова» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

2. Ахад Алекперович **Якубова**, СССР Наукăсен Академийĕн Азербайджанри филиалĕн Президиум председателĕн заместительне, «Грязевые вулканы западной части Апшеронского полуострова и их связь с нефтеносностью» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 100.000 тенкĕлĕх

1. Каныш Аваитаевич **Сатпаева**, СССР Наукăсен Академийĕн Казахстанри филиалĕн Президиум председателĕн заместительне, «Рудные месторождения Джезказганского района Казахской ССР» ятлă научнăй ĕçшĕн.

2. Василий Владимирович **Шулейкина**, СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспондентне, СССР Наукăсен Академийĕн Хура тинĕс çинчи гидротехнически станцийĕн директорне, «Физика моря» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

д) Биологи наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—200.000 тенкĕлĕх

1. Яков Оскарович **Парнаса**, УССР Наукăсен Академийĕн биохими институчĕн профессорне, мышцăсенче веществосем улшăнса тăнине тĕпчесе пĕлес енĕпе тунă ĕçсемшĕн. Вĕсен итогĕсене 1940 çулăн вĕçĕнче «Гликогенолиз» ятлă ĕçре пичетлесе кăларнă.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 100.000 тенкĕлĕх

1. Алексей Алексеевич **Заварзина**, Пĕтĕм Союзри экспериментальнăй медицина институчĕн профессорне, «Эволюционная гистология нервной системы» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

2. Сергей Иванович **Огнева**, Мускаври Ленин орденлĕ Ломоносов ячĕпе тăракан Государственнăй университетăн профессорне, «Звери СССР и прилежащих стран» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта туса пĕтернĕскершĕн.

е) Экономикăллă наукăсем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—200.000 тенкĕлĕх

1. Владимир Леонтьевич **Комарова**, СССР Наукăсен Академийĕн президентне; СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членĕсене: Иван Павлович **Бардина**, Эргард Викторович **Брицкене**, Владимир Николаевич **Образцова**, Станислав Густавович **Струмилина**, Лев Дмитриевич **Шевякова**; профессорсене: Вениамин Исаакович **Вейца**, Николай Николаевич **Колосовские**, Василий Николаевич **Козлова**, Борис Григорьевич **Кузнецова**, Роман Львович **Певзнера**, Абрам Ефимович **Пробита**, Давид Михайлович **Чижикова**; научнăй сотрудниксене: Владимир Моисеевич **Гальперина**, Михаил Константинович **Расцветаева**, Вячеслав Викторович **Рикмана**, Борис Аркадьевич **Гуревича**, Иван Антонович **Дорошева**, Михаил Адамович **Стекольникова**, «О развитии народного хозяйства Урала в условиях войны» ятлă ĕçшĕн.

ж) Ялхуçалăх наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—200.000 тенкĕлĕх

1. Иоганн Гансович **Эйхфельда**, Пĕтĕм Союзри В. И. Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх наукисен Академийĕн действительнăй членне, Пĕтĕм Союзри растениеводство институчĕн директорне, ССР Союзĕн чи çурçĕр пайĕнчи çĕрĕсĕн теорийĕпе практики енĕпе тунă пурнишĕн те паллă пулса тăракан ĕçсемшĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми — 100.000 тенкĕлĕх

1. Михаил Иудович **Дьякова**, наукăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Пушкински зоотехнически лабораторин директорне, ялхуçалăхĕнчи выльăх-чĕрлĕхсене тăрантарас тĕлĕшпе пурнишĕн те паллă пулса тăракан научнăй ĕçсем тунăшăн тата комбикормовăй промышленноçăн чикĕсĕсене тĕпчесе палăртнăшăн.

2. Леонид Иванович **Прасолова**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, Докучаев ячĕпе тăракан почвеннăй институтăн директорне, ССР Союзĕн Европăри пайĕнчи тăпрасен карттине тунăшăн тата çĕр фончĕсене шутласа кăлармалли меслете тĕпчесе палăртнăшăн.

з) Медицина наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—200.000 тенкĕлĕх

1. Алексей Иванович **Абрикосова** тата Николай Николаевич **Аничкова**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членĕсене, «Частная патологическая анатомия, ч. II. Сердце и сосуды» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1940 çулăн вĕçĕнче пичетлесе кăларнăскершĕн.

2. Сергей Иванович **Спасокукоцкие**, наукăсен тава тивĕçлĕ деятельне, Мускаври иккĕмĕш медицински институтăн профессорне, хирурги енĕпе тунă пурнишĕн те паллă пулса тăракан ĕçсемшĕн тата «Актиномикоз легких» ятлă ĕçшĕн, 1940 çулăн вĕçĕнче пичетлесе кăларнăскершĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Николай Николаевич **Петрова**, СССР Наукăсен Академийĕн член-корреспондентне, «Онкология и хирургия язвенной болезни желудка и двенадцатиперстной кишки» ятлă темăпа тунă научнăй ĕçсемшĕн, 1941 çулта «Краткий очерк сравнительной патологии опухлей у животных и человека» ятлă кĕнекере тата «Язвенная болезнь желудка и двенадцатиперстной кишки и ее хирургическое лечение» ятлă сборникре пичетлесе тухнăскерсемшĕн.

2. Сергей Сергеевич **Юдина**, Склифасовский ячĕпе тăракан институтăн главнăй хирургне, военно-полевой хирурги енĕпе тата искусственнăй пищевод енĕпе тунă научнăй ĕçсемшĕн: «Заметки по военно-полевой хирургии», «О лечении военных ран препаратами сульфамидов» тата «Некоторые впечатления и размышления о 80 случаях операций искусственного пищевода» ятлă ĕçсемшĕн, 1941 çулта пичетленсе тухнăскерсемшĕн.

и) Çар наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—200.000 тенкĕлĕх

1. Иван Платонович **Гравене**, дивинженера, Хĕрлĕ Çарăн Ленин орденлĕ Дзержинский ячĕпе тăракан артиллери Академийĕн профессорне, «Балистика полузамкнутого пространства» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1940 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Евгений Захарович **Барсукова**, профессора, çар наукисен докторне, «Русская артиллерия в мировую войну» ятлă вăрçă енĕпе çырнă историллĕ ĕçшĕн, пĕрремĕшпе иккĕмĕш томĕсемшĕн, 1938—1940 çулсенче пичетлесе кăларнăскерсемшĕн.

2. Михаил Михайлович **Дубинина**, бригинженера, Хĕрлĕ Çарăн химиллĕ тапăнуран хÿтĕленес енĕпе ĕçлекен Ворошилов ячĕпе тăракан Академийĕн профессорне, химиллĕ тапăнуран сыхланас енĕпе тунă научнăй ĕçсемшĕн.

к) Историпе филологи наукисем енĕпе

Пĕрремĕш степеньлĕ преми—200.000 тенкĕлĕх

1. Владимир Петрович **Потемкина**, профессора, истори наукисен докторне, Сергей Владимирович **Бахрушина**, Алексей Владимирович **Ефимова**, Евгений Алексеевич **Косминские**, Алексей Георгиевич **Нарочицкие**, Владимир Сергеевич **Сергеева**, Сергей Данилович **Сказкина**, профессорсене, Евгений Викторович **Тарлене**, СССР Наукăсен Академийĕн действительнăй членне, Владимир Михайлович **Хвостова**, профессора, «История дипломатии» кĕнекешĕн (1-мĕш томĕ), 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

Иккĕмĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх.

1. Виктор Васильевич **Данилевские**, историпе материальнăй культура академийĕн действительнăй членне, «История гидросиловых установок в России до XIX века» тата «И. И. Ползунов. Труды и жизнь» ятлă кĕнекесемшĕн, 1940 тата 1941 çулсенче пичетлесе кăларнăскерсемшĕн.

2. Борис Алексеевич **Куфтина**, Грузин ССР-н Государственнăй музейĕн консультантне, «Археологические раскопки в Триалети. Опыт периодизации памятников» ятлă научнăй ĕçшĕн, 1941 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

л) Философи наукисем енĕпе

Иккĕмĕш степеньлĕ преми—100.000 тенкĕлĕх

1. Сергей Леонидович **Рубинштейна**, Ленинградри Герцен ячĕпе тăракан педагогика институчĕн профессорне, «Основы общей психологии» ятлă кĕнекешĕн, 1940 çулта пичетлесе кăларнăскершĕн.

Асăрхаттарни: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Наукăпа изобретени, искусствăпа литература енĕпе 1941 çулта питех те палăракан ĕçсем тунăшăн Сталинла премисем памалла тăвасси çинчен» 1941 çулти январĕн 11-мĕшĕнче йышăннă постановление кăштах улшăнтарса, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак постановленире физикăпа математика наукисем енĕпе пĕрремĕш степеньлĕ пĕр преми çĕнĕрен хушса пама палăртнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль, 1942 çулти апрелĕн 10-мĕш.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (ХĕвелаНăç фрончĕ). Капитан-орденоносец Я. И. Покатилов командир пулса ертсе пыракан эскадрон Смоленск облаçĕнчи халăх турăнакан пунктсене фашистсенчен ирĕке кăларассишĕн пыракан çĕнтерÿллĕ çапăçусенче питех те ăнăçлăн кĕрешет. **Укерчĕк çинче:** эскадронри боецсем тăшманăн тылĕнче разведкăра.

Л. ВЕЛИКЖАНИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Тăшманăн пĕр контратакине мĕнле сирсе пăрахнă

БРЯНСК ФРОНЧЕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Апрелĕн 4-мĕшĕнче Совет Информаци Бюровĕ Брянск фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн вăйлă контратакине ăнăçлăн сирсе пăрахни çинчен пĕлтерчĕ. Фашистсем çав çапăçура 18 танк çухатнă, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна яхăн вĕлернĕ тата амантнă. Пирĕн чаçсем нумай трофейăсем тытса илнĕ. Çав çапăçăвăн хăшпĕр эпизочĕсене çырса кăтартăпăр.

Тăшман, çĕрлехи тĕттĕмпе усă курса, фронтăн пысăках мар участокне 2 полк ытла пехота пухнă тата 25 танк илсе пынă. Çутăласпа нимĕçсем пирĕн позици çине артиллерипе минометсенчен пĕр харăс пеме тытăннă. Снарядсен кĕрлевĕ 30 минута хушши илтĕнсе тăнă. Артиллерипе минометсен хÿттипе нимĕç танкĕсем вирĕнчен пирĕн позици çинелле тухнă. Танксем хыççăнче пытанса, тăшманăн пехоти пынă. Чи малтан шурă халат тăхăннă автоматчиксем тухнă, вĕсем хыççăн 2 эшелонпа стрелоксем пынă. Фашистсем ялан хиех хăратасшăн пулса пĕр вĕçĕмрен тĕллĕ-паллисĕр автоматсемпе винтовкăсенчен пенĕ.

Тăшманăн контратаки пирĕннисемшĕн кĕтмен япала пулман. Танксем пымалли çулсем çине малтанах танксене хирĕç кĕрешмелли хатĕрсем тупса хунă. Сыхарса килекен фашистсене пирĕн артиллеристсем орудисенчен, минометсенчен тата пулеметсенчен тăвăллăн персе кĕтсе илнĕ. Нимĕç машинисем яла çитнĕ çитменех вĕсем çине танксене хирĕç пемелли артиллерин батарейи, старши лейтенант Марынăн батарейи, вут çутарма тытăннă. Старши лейтенант пакорама патне хăй тăнă. Вăл орудирен тÿрĕ тĕллесе пĕрре персех фашистсен малти танкне çĕмĕрнĕ. Унтан вăл тата иккĕшне стройран кăларнă. Нимĕçсен тăваттăмĕш машинине старши сержант Жерноклеев пĕтерсе тăкнă.

Ытти участоксенче танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе хĕçпăшалланнă боецсем гитлеровецсен броньăланă машинисене хирĕç тухнă. Вĕсем, хăюллăн тата ĕçе пĕлсе кĕрешсе, танксене хирĕç пемелли пăшал совет воинĕсен аллинче калама çук вăйлă пулса тăнине тата тепĕр хут кăтартрĕç. Пирĕн боецсем фашистсен 14 танкне умлăн-хыçлăн лапчăта-лапчăта хунă, ыттисене каялла çавăрнă.

Хăйсен боевой техники пысăк çухатусем тÿсни нимĕçсене калама çук хăратса пăрахнă, çапах та вĕсем, хăйсен офицерĕсем хистесе хăвалапипе, каллех атакăна ыткăннă. Çапăçу хĕрнĕçемĕн хĕрсе пынă. Хăшпĕр вырăнта нимĕç салтакĕсемпе пирĕн боецсем штык вĕççĕн тăрсах çапăçнă. Тувелидин красноармеец хăйĕн умĕнчи 10 оккупанта персе вĕлернĕ, старши лейтенант Коробейников нимĕçсен 14 салтакне вĕлернĕ. Пирĕн орудисемпе минометсен тата пулеметсен вутĕнчен 100-шер гитлеровец пĕтнĕ. Пĕр Байнгуков юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени кăна 300 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Çак хĕрÿ çапăçу тăшмана флангран вĕйлĕн тырса çапма пулăшнă. Нимĕçсем, çапăçу хирне суранланнă салтакĕсене, хĕçпăшалĕсене тата çар пурлăхĕсене пăрахса хăварса, каялла чакнă.

Г. КРЫЛОВ.

Тăшманăн тылĕнче партизансен кĕрешĕвĕ вăйлансах пырать

БРЯНСК ФРОНЧЕ, апрелĕн 7-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче пурăнакан çынсем, гитлеровецсен ирсĕр ĕçĕсене тарăхса çитсе, фашистсене вĕлерессĕ те кайран партизансен отрячĕсене каяççĕ. Орел облаçĕнчи П. ялĕнчи хресченсем те çавăн пек тунă. Вĕсем, хăйсен ялне вырнаçнă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пуртăпа касса, сенĕксемпе чиксе вĕлерсе тăкнă та, хăйсем пĕтĕмĕшпех çав районра кĕрешекен партизансен отрядне хутшăннă.

Тепĕр ялта тата ак çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Нимĕçсем çав яла партизансене вăйлăн пулăшнă çынсене пĕтерсе тăкма 150 салтак янă. Çав ялта пурăнакан çынсемпе партизансем засада тунă. Вĕсем фашистсен отрячĕ çине кĕтмен çĕртен флангсенчен те, тылран та тапăннă. Нимĕçсен офицерĕсемпе салтакĕсене виçĕ пайĕнчен икĕ пайне пĕтерсе тăкса, ыттисене каялла хăваласа янă. Çапăçу хирне нимĕçсем 100 виле пăрахса хăварнă. Партизансем питĕ нумай трофейăсем тытса илнĕ — 10 станковăй тата 4 çăмăл пулемет, пĕр оруди, 2 миномет, 400 снаряд, 120 винтовка, 6 автомат, 70.000 патрон тата ытти çар пурлăхĕ нумай.

Ăнăçлăн çапăçнă хыççăн никам пухмасăр хăй тĕллĕнех митинг уçăлнă. Ялти халăхсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç вĕсене пĕтерсе тăкиччен алла хĕçпăшал тытса кĕрешме тупа тунă. Çавăнтах партизансен отрядне темиçе вуншар çын çĕнĕрен хутшăннă. Вĕсене пурне те гитлеровецсенчен туртса илнĕ винтовкăсемпе тата автоматсемпе хĕçпăшаллантарнă. Темиçе сехет иртсен ял çийĕнче нимĕçсен 5 бомбардировщикĕ курăнса кайнă. Вĕсем ял çине 55 бомба пăрахса ăна пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Анчах ял халăхĕпе партизансем вăрмана тарса пытаннă та пурте сывах юлнă.

Пирĕн чаçсем совет çĕрне утăм хыççăн утăм ирĕке кăларса пыраççĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧЕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Пирĕн пехотăн пĕр чаçĕ, çăмăл танксемпе артиллери пулăшса пынипе, противникăн ĕнси çинче тенĕ пекех нимĕçсем йышăннă халăх пурăнакан пункта çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Çав пунктра пирĕннисем нимĕçсен юсавлă 6 орудине, 3 танкне, 12 автомашинине, снарядсемпе патронсен пысăк запасне тытса илнĕ. Ялăн урамĕсенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 100 ытла вилли выртса юлнă.

Юнашар кĕрешекен тепĕр стрелковăй часть 230 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Совет артиллерисчĕсем çак участокра нимĕçсен боеприпассем усракан икĕ складне тата 10 дзотне сирпĕнтерсе янă. Совет воинĕсем нимĕçсен 220 винтовкине, икĕ миномечĕпе тата 8 пулеметне тытса илнĕ.

Пирĕн подразделенисенчен пĕри, нимĕçсем питĕ хытă çирĕплетнĕ пункта атакăлама çĕкленсен, тăшман контратака тума хăтланса пăхнă. Хĕрÿллĕ çапăçу пуçланса кайнă. Анчах вăл нумая пыман. Противник совет воинĕсем пырса çапнине тÿсse тăраймасăр, паникăна ÿксе каялла тарнă. Артиллери вучĕ пулăшса пынипе пирĕн пехотинецсем тăшмана хыçран хăваласа кайнă.

Çак çапăçура пуринчен ытла артиллеристсем хăйсене кăтартнă. Вĕсем нимĕçсен вăйлăн çирĕплетнĕ 13 точкине, ун патĕнчи фашистсемпе пĕрлех, пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн минометнăй батарейине, пулеметсен виçĕ точкине шăлса илнĕ. Пуринчен ытла Арсеньевăн оруди расчечĕ пысăк паттăрлăх кăтартнă. Орудине усă вырăна кустарса тухса, Арсеньев хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле тăшманăн укрепленийĕсем çине тĕллесе персе темиçе минута хушшинчех тăшманăн 7 огневой точкине пĕтерсе тăкнă.

И. ГРИБОВ.

Гвардеецсем Гитлерăн резервĕсене лÿчĕркесе тăкаççĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, апрелĕн 10-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Енер артиллерин гвардейски чаçĕ противникăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона рубежне çĕмĕрсе кĕнĕ. Икĕ хутчен орден илнĕ Букульманов капитанăн подразделенийĕ нимĕçсен пехоти пухăннă тĕле тата пирĕннисем малтан та чылай аркатнă тăшманăн позицийĕ çине персе тăнă. Противникăн батарейисем пĕрин хыççăн тепри пĕтсе пынă, пирĕннисем тăшманăн хирĕç тăмалли узелне таранăн шăтарса кĕнĕ. Шăтарса кĕрессинчен хăраса ÿкнĕ противник хăйĕн хăрушлăх умне çитсе тăнă участокĕ патне пехотăпа автоматчиксене 15 вагонпа, тата пĕр эшелон боеприпассем илсе пынă.

Артиллерин наблюдательнăй пункчĕ артиллеристсене çĕнĕ цель курăнса кайни çинчен вăхăтра пĕлтернĕ. Букульманов капитан команда панă:

— Фашистсен эшелонĕ çине—огонь!

Пĕрремĕш снаряд тĕлленĕ вырăна çитеймерĕ. Иккĕмĕш ун çывăхне ÿкрĕ. Поезд капкăна лекнĕ тискер кайăк пек кускаларĕ те чугунçул çинчех шăлланса ларчĕ. Тепĕр снаряд поездăн каялла чакмалли çулĕ çинчи рельсĕсене татăкăн-татăкăн çÿлелле çĕклесе [illegible]рĕ. Тепĕр темиçе минутăран эшелонран турпас татăкĕсем çеç тăрса юлчĕç. Боеприпассем шартлатса çурăлаççĕ, паникăна ÿкнĕ гитлеровецсем сапаланса тарса пĕтрĕç.

Артиллерирен çакăн пек ăнăçлăн пенĕ çĕрте кĕçĕн сержантсен Шишмецовпа Рахимов юлташсен оруди расчечĕсем уйрăмах палăрчĕç. Артиллеристсен ытти падразделенийĕсем çак вăхăтра тăшманăн тата икĕ батарейине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен дзотне çĕмĕрнĕ, тăшман пехотин виçĕ подразделенине сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ. Оруди наводчикĕ Соболев тĕл тивертнипе фашистсен пехотин взводне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

Д. ЩУКИН.

ТАНК ÇАПĂÇУРА

БРЯНСК ФРОНЧЕ. (**ТАСС спецкорĕ**) Танк командирĕ Галочкин лейтенант тата танкăн механик-водителĕ Пересунько тăшмана хирĕç икĕ талăк хушши пĕр чарăнмасăр тата хаяррăн çапăçнă. Вĕсен танкĕ кăнтăрла та, çĕрле те нимĕçсен позицийĕсене атакăланă, тăшманăн огневой точкисене пĕтерсе пынă, хăйĕн гусеницисемпе унăн чĕрĕ вăйне таптаса вĕлере-вĕлере тăкнă. Виççĕмĕш кунне чаçăн командирĕ нимрен хăраман танкистсене канма ирĕк панă. Анчах та Галочкинпа Пересунько, çапăçу хавалĕпе çунса тăраканскерсем, нимĕç оккупанчĕсене тем пек курайманскерсем, хăйсене панă тивĕçлĕ канăва йышăнман.

Темиçе сехетрен Галочкин танкĕ каллех çапăçăвăн чи хĕрÿллĕ участокĕнче пулнă. Советсен хăрушă машини тăшманăн укреплениййĕ çине ыткăннă; фашистсен артиллерийĕ вăйлăн кансĕрлесе тăнă пулин те, танк тăшманăн инçетри тылне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Пирĕн танк пĕр пĕччен тăшманăн противотанковăй орудийĕсене хирĕç хăюллăн çапăçнă, фашистсене питĕ пысăк çухатусем кÿнĕ. Боевой задание пурнăçланă ĕнтĕ, анчах та Галочкинпа Пересунько хăйсен танкĕ валли çĕнĕрен те çĕнĕ объектсем тупса пынă. Вĕсем хăйсен танкне тăшманăн снарячĕсем темиçе çĕртен шăтарнă хыççăн та çаплах çапăçнă. Боеприпасĕсем йăлтах пĕтсен тин хăйсен чаçне таврăннă.

БАЛТИКАРИ ДЕЙСТВУЮЩИ ХĔРЛĔ ЯЛАВЛА ФЛОТ. **Укерчĕк çинче:** Н-ски фортри кĕçĕн командирсен Воробьевпа Комиссаровăн орудийĕсем нимĕçсем çине переççĕ.

Б. ВАСЮТИНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Большевикла агитаци ĕҫĕнчи ҫитĕнӳсемшĕн

Канашри вагонсем юсакан заводри парторганизаци отечественнăй вăрҫă вăхăтĕнче рабочисемпе служащисем хушшинче тата вĕсен ҫемьисенче политикăллă агитацине анлăн сарса ячĕ.

Массăллă агитаци ĕҫне туса пыма ертсе пыракан работниксене тата производствăра ĕҫлекен, политика тĕлĕшпе лайăх пĕлекен, идеологи енĕпе ҫирĕп тăракан юлташсене хушнă. Агитаторсем хăйсен ĕҫĕсене юратаҫҫĕ. Вĕсен пĕтĕм агитацийĕ производствăри задачисене тултарас, рабочисем хушшинчи ĕҫ дисциплинине ҫирĕплетес ыйтусемпе ҫыхăнса пырать.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче заводри агитколлектив тăван ҫĕршывра пулса пыракан халăхи ĕҫсем ҫинчен тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ҫинчен чылай докладсем туса ирттерчĕ. Агитаторсене вырăнти активистсем те пулăшаҫҫĕ. Профессор Кузнецов, Макаров рабочисем хушшинче нимĕҫсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ районсенчи совет халăхĕн партизанла кĕрешĕвĕ ҫинчен, совет воинĕсен геройлăхĕ ҫинчен, нимĕҫ захватчикĕсене Мускав патĕнче ҫĕмĕрсе тăкни ҫинчен тата Германири фашизм хăйĕн вилĕмĕ патне ҫывхарни ҫинчен калаҫусем туса ирттерчĕҫ.

Юлашки вăхăтра стена хаҫачĕсемпе плакатлă агитацин вырăнĕ чылай ӳсни курăнать. Февральре завод цехĕсенче 17 стена хаҫачĕ тата темиҫе боевой листок кăларнă. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене радиопа илнĕ кунах пичетлесе кăларса рабочисем хушшинче сараҫҫĕ.

«Совет халăхĕн нимĕҫ оккупанчĕсене хирĕҫ пыракан отечественнăй вăрҫи» текен темăпа вăтăра яхăн лозунгсемпе плакатсем ҫырса кăларнă. Цехсенче, завод картишне кĕмелли хапха патĕнче, завод талккишĕнче илемлĕн ҫырнă плакатсем ҫакăнса тăраҫҫĕ, вĕсем кашни рабочие, кашни инженерпа техника хуҫасăрлăха пĕтерессишĕн, материалсене перекетлĕн тыткалассишĕн кĕрешме чĕнеҫҫĕ.

«Юлташ, выртакан болта илсе хур,—ҫакăнпа эсĕ метала перекетлеме пулăшатăн»—тесе чĕнет пĕр плакачĕ. Ку плаката заводри рабочисем хăйсемех ҫырнă.

Кашни цехрах ĕҫ планне мĕнле тултарса пынине кăтартакан уйрăм хăма, лайăх стахановецсен сăнĕсене тăратмалли витрина пур. Витрина ҫине: «Хастар ĕҫпе тултаракан кашни процентах—тăшмана ҫапни пулать», «Фронта эсĕ мĕнле пулăшрăн?», «Хĕрарăмсем, фронта кайнисем вырăнне тăрăр!» текен чĕнӳллĕ лозунгсене ҫырса ҫапнă.

Агитаци ĕҫĕ ахаль ҫухалмасть. Ҫакăн пек йĕркеллĕ агитаци ĕҫне пула, рабочисем хушшинчи халиччен нихăш енчен те палăрман ҫынсемех халĕ производствăра малта пыракансем е тата хăйсем те пултаруллă агитаторсем пулса тăраҫҫĕ, вĕсем хăйсен юлташĕсене ĕҫсемпе те, сăмахĕсемпе те производствăра пысăк ҫĕнтерӳсем тума пулăшаҫҫĕ. Тĕслĕхе илсен: вагонсем тăвакан цехри сверловщик-комсомолец Глохин юлташ, вăрҫăччен паллă мар пулнă ҫамрăк, халĕ нормăна 200—300 процент тултарса пырать. Е тата 14-мĕш номерлĕ цехри профком председателĕ, токарь Бельский юлташ, нормăна 400 процент таран тултарать. Фронтовой бригадăн бригадирĕ, Хĕрлĕ Ҫар 24 ҫул тултарнă ятпа пынă социализмлă ăмăртура куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ ялав илнĕ бригадăна ертсе пыракан комсомолец Чернухин хăйĕн ĕҫ нормине кулленех 200-300 процент тултарса пырать. Тимĕрҫĕсен цехĕнчи парторг Третьяк юлташ, хăйĕн коллективне лайăх организацилесе, цеха фронтри пек йĕркепе ĕҫлеттерсе пырать. Третьяк пултаруллă агитатор кăна мар, ҫав вăхăтрах вăл тата примерлă производственник та пулса тăрать. Вăрҫă кунĕсенче Третьяк юлташ кашни сменăра 3—4-шар норма тултарать. Утиль цехĕнчи комсорг Харлампиди юлташ заводăн хуҫалăхĕпе политикăллă пурнăҫĕнче пысăк активлăхпа ĕҫлет. Хăйĕн активлăхне кура ăна цехри мастер туса хунă.

Производствăри рабочисен уйрăм ҫитĕнĕвĕсем пĕтĕм завода пысăк ҫĕнтерӳсем тума май параҫҫĕ. Рабочисен производствăри тимлĕхĕпе политикăллă активлăхне ҫĕклеме лайăх йĕркеленĕ большевикла агитаци пулăшать. Ҫакна лайăх астуса ĕҫлеҫҫĕ паянхи кун вагонсем юсакан заводри чăн-чăн патриот-агитаторсем.

П СЕРГЕЕВ.

Хуҫалăхра кирлĕ таварсене ытларах туса кăларар

Пирĕн вырăнти промышленность халĕ пуринчен ытла фронта кирлĕ хĕҫпăшалсем туса кăларать. [illegible] валли куллен кирлĕ таварсене кăларасси [illegible] промышленноҫпа промысла кооперацийĕн артельсен ҫине [illegible]. Вĕсен фронтри [illegible] заказсене вăхăтра пурнăҫланипе пĕрлех, хуҫалăхра куллен кирлĕ япаласем те туса кăлармалла.

Иртнĕ ҫулта Сĕнтĕрвăрри районĕнчи чылай предприятисемпе промартельсем [illegible] валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе лайăх ĕҫлерĕҫ. Сăмахран, «Крестьянский кузнец» артель 1942 ҫулти плана 186 процент, «Парижская Коммуна»—109 процент, «Социализм»—106 процент, «Портной»—102 процент тултарнă. Анчах ҫак вăхăтра начар ĕҫлекен артельсем те пулчĕҫ. Хуҫалăхра кирлĕ япаласем туса кăлармалли [illegible] «Стройматериал» артель плана [illegible] процент, Апатҫимĕҫ комбиначĕ 51 процент ҫеҫ тултарнă. Вырăнти промышленность системинче [illegible] промкомбинат те хăйне плана начар тултарнă.

Паллах, [illegible] артельсем промкомбинат [illegible] тивĕҫлĕ. Вĕсен, ку таранччен [illegible] таварсене [illegible] ҫĕнĕ йышши таварсене туса кăларма [illegible] [illegible]

[illegible] кăлармалли плана «Стройматериал» артель 30 процент ҫеҫ, «Портной» 38 процент, апат-ҫимĕҫ комбиначĕ 77 процент тултарнă. «Крестьянский кузнец» артель шуртăсем, пăтасем т. ыт. япаласем туса кăларас тĕлĕшпе уйрăмах юлса пырать. Унăн ытти продукцийĕсем енĕпе те ĕҫсем чаплах мар.

[illegible]

[illegible] приятисемпе артельсен малашнехи вăхăтра мĕн-мĕн тумаллине палăртрĕ, вĕсен руководителĕсене таварсен хисепне нумайлатас тата пахалăхе лайăхлатас тĕлĕшпе ытларах ĕҫлеме хушрĕ.

И. ФИЛИППОВ.

Ҫуракине большевикла хатĕрленер

ПЛУГСЕМ ХАТĔР МАР

СОВЕТСКОЕ. «Хĕрлĕ Ҫар» колхозра плугсене юсама халĕ те тытăнман. Вĕсем кĕркунне ăҫта пăрахнă ҫавăнтах сапаланса выртаҫҫĕ. Плугсене юсама кирлĕ ҫинчен кăмах пуҫласан, колхоз председателĕ «тимĕрҫĕ ҫук» тесе сăрсе ярать. Анчах та ҫуракине тухма плугсене пурĕперех юсас пулать. Ҫураки тимĕрҫе кĕтмест.

И. ЖЕСТИН.

Ҫĕрулми тăррине касса хатĕрлеҫҫĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Академик Т. Д. Лысенко ҫĕрулми тăррисене касса илсе вăрлăхлăх усрама сĕннине шута илсе, районри чылай колхозсем ҫĕрулми тăррисене касса хăварма тытăнчĕҫ. Тутаркассинчи «Моряк» колхоз членĕсем апат-ҫимĕҫе каякан ҫĕрулмирен 6 центнер ҫĕрулми тăрри касса хăварнă. Ҫавăн пекех ҫак ĕҫе «Октябрь» тата Урицкий ячĕпе тăракан колхозсем те ăнăҫлă туса пыраҫҫĕ.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔСЕН КУРСĔ

ҪĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Ҫак кунсенче колхоз председателĕсен районри курсĕ хăйĕн ĕҫне вĕҫлерĕ. Унта 34 колхоз председателĕ пулнă. Курсра «Партипе правительство колхозсем ҫинчен кăларнă решенисем тата колхозсем умĕнче тăракан задачăсем», «Ялхуҫалăх артелĕн уставĕ», «Уйхир тата пахчаҫимĕҫ тумалли агротехника» тата ытти темăсем тăрăх занятисем пулса иртнĕ.

Ҫитес вăхăтра районра колхоз бригадирĕсен курсĕ ĕҫлеме тытăнать. Унта 90 ҫынна вĕрентме палăртнă.

Г. ПЕТРОВ.

Ҫĕнĕ кадрсем

ҪĔРПУ. Районри ҫĕрĕҫ пайĕ, ҫак кунсенче кĕске срокла курссем организацилесе, аслă конюхсем пулса ĕҫлеме 24 ҫынна, ферма заведующийĕсем пулса ĕҫлеме 11 ҫынна вĕрентсе кăларчĕ. Ҫавăн пекех махорководсен, кок-сагыз акса ӳстерекенсен т. ыт. курсĕсене те туса ирттерчĕ. Унсăр пуҫне майракаллă шултăра выльăхсене кӳлсе ҫӳреме вĕрентес тĕлĕшпе семинар тунă. Семинарта 42 ҫын пулнă.

Пахча-ҫимĕҫ бригадирĕсен курсĕ

КУКЕҪ. Райҫĕрĕҫ пайĕ организациленĕ 10 кунлăх курсран иртнĕ кунсенче 14 ҫын вĕренсе тухрĕҫ. Вĕсем пурте колхозсенче пахча-ҫимĕҫ бригадисене ĕҫре ертсе пыма лайăх вĕренчĕҫ.

Халĕ ҫĕнĕрен курс уҫăлчĕ. Унта вĕренекенсем пурте хĕрарăмсемпе хĕрачасем. Вĕсем те тухăҫлă пахча-ҫимĕҫсем туса илме тимлĕн вĕренеҫҫĕ.

И. ВАСИЛЬЕВ.

ЯЛХУҪАЛĂХ МАШИНИСЕНЕ ВĔРЕНЕҪҪĔ

СĔНТĔРВĂРРИ. Пединститутри студентсемпе студенткăсем ялхуҫалăх машинисене вĕренеҫҫĕ. Организациленĕ кружоксенче халĕ 190 студент вĕренет. Ҫуллахи каникулсенче вĕсем тăван колхозĕсен уйхирĕсенче ĕҫлеме хатĕрленеҫҫĕ.

Н. МИЛАШ.

Ҫуракине ĕҫлеме

ШĂХАСАН. Вăтам шкулăн аслă класĕсенче вĕренекенсене ҫуракинче ĕҫлеме хатĕрлеҫҫĕ. Халĕ вĕсенчен тракторист ĕҫне 25 ачана, учетчик ĕҫне 5 ачана, прицепщик ĕҫне 34 ачана вĕрентсе ҫитереҫҫĕ. Вĕсем ҫураки ĕҫне Шăхасан, Атнаш тата Сиктерь колхозĕсен уйхирĕсенче хутшăнаҫҫĕ.

7-мĕш «А» класра вĕренекенсем П. Филиппов утарта, А. Куропаткин сысна фермине, И. Петров кролик фермине ĕҫлеҫҫĕ.

А. АГИМ.

КОЛХОЗА ПУЛĂШАҪҪĔ

ЕТĔРНЕ. Ядринори вăтам шкулта вĕренекенсем колхозсене ҫуракине хатĕрленме пулăшаҫҫĕ. Вĕсем «Дружба», «Смычка», «Хĕрлĕ Ҫăлтăр», «Сура» тата «XI лет Октября» колхозсенче вăрлăх пухаҫҫĕ, тырă сортлаҫҫĕ, тислĕк турттараҫҫĕ. Паянхи куна 250 центнер вăрлăх, 83 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, уя 825 лав тислĕк кăларнă.

П. КРАСНОВ.

Ялхуҫалăх ĕҫне вĕренеҫҫĕ

ҪĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.) Хутар вăтам шкулĕнче вĕренекенсем ҫуллахи вăхăтра колхоз уйхирĕсенче ĕҫлеме хатĕрленеҫҫĕ. Ялхуҫалăх машинисене тата ытти ĕҫсене тума вĕренес тĕлĕшпе 7-мĕшпе 8-мĕш классенче ятарласах эрнере икĕ хутчен занятисем пулса иртеҫҫĕ, 9—10-мĕш классенче ялхуҫалăх предмечĕсĕр пуҫне тата тракторпа ĕҫлеме вĕренеҫҫĕ. Ку енĕпе занятисене районри МТС механикĕ Чуркин юлташ ирттерет. Ҫак кунсенчех вĕренекенсем программăна вĕҫлеҫҫĕ.

ҪАМРĂК ВЫЛЬĂХСЕНЕ КОНТРАКТАЦИЛЕҪҪĔ

СĔНТĔРВĂРРИ. Юртакассинчи «Искра» колхоз хăйĕн обществăллă выльăхĕсен хисепне ӳстерес тата кашни колхознике ĕнеллĕ тăвас шутпа ҫамрăк выльăхсене контрактацилерĕ. Ҫак иртнĕ кунсенче колхоз 30 пăру контрактациленĕ.

Колхоз ҫитес ҫул хур ферми организацилеме хатĕрленет. Ҫак шутпа ҫитес кунсенчех 8 хур илме палăртнă.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Хисеплĕ колхозник-агитаторсем

Дарья Михайловна Гаврилова — Первомайски районри «Октябрь» колхозăн активлă членĕ. Гаврилова партире тăман хĕрарăм. Январь уйăхĕнчен пуҫласа вăл Хĕрлĕ Ҫар валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕҫлекен комиссире тăрать.

Хăйĕн комиссири ĕҫĕсене Гаврилова юлташ Хĕрлĕ Ҫар боецĕсем валли ҫĕнĕрен ҫур килограмм ҫăм, мулаххай тата ҫăм алшишпе носкисем панинчен пуҫласа ячĕ. Ҫакăн хыҫҫăн вăл ялти колхозниксене пухса, вĕсене хăйĕн фронтри упăшкинчен илнĕ ҫырăва вуласа пачĕ. Ку ҫырура Хĕрлĕ Ҫар тунă пысăк ҫĕнтерӳсем ҫинчен тата нимĕҫ оккупанчĕсен тискер ĕҫĕсем ҫинчен каласа панă.

Гаврилова юлташ ирттернĕ калаҫу тата вăл хăйĕн лайăх ĕҫĕсемпе кăтартса панă пример ытти колхозницăсене те хавхалантарчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Ҫарăн паттăр боецĕсене пулăшас тĕлĕшпе пысăк ĕҫсем турĕҫ ĕнтĕ. Пĕр тытăннă ĕҫе Гаврилова вĕҫне ҫитермесĕр пăрахмасть. Вăл хăй ĕнтĕ колхозри чи хисеплĕ агитатор пулса тăрать. Колхозниксем ăна юратаҫҫĕ, хисеплеҫҫĕ.

Гаврилова юлташ Хĕрлĕ Ҫар валли кирлĕ япаласем пухассипе ҫеҫ чарăнса тăмасть. Ҫак хушăрах вăл колхоз хуҫалăхне ҫирĕп тытса тăрассишĕн те пысăк тимлĕхпе ĕҫлет, уйрăмăнах выльăх-чĕрлĕх фермишĕн тăрăшать. Гаврилова юлташ ҫине тăрса ĕҫленипе фермăри выльăхсене, вĕсем ӳт-тирĕ тĕлĕшпе самăррине е ырханнине кура, темиҫе ушкăна уйăрчĕҫ; выльăха апат памалли вырăнсене таса тытаҫҫĕ, кунта кашни уйрăм выльăхшăн кам ăн ответ тытмаллине лайăх пĕлсе тăраҫҫĕ.

«Октябрь» колхозрах Алексей Рябчиков ятлă ватă колхозник пурăнать. Рябчиков агитаторсен коллективĕнче тăмасть. Анчах та вăл колхозниксем хушшинче Гавриловăран кая мар, кулленех чăн-чăн большевикла агитаци туса пырать. Рябчиков юлташ хăй сăмахĕпе агитацилениие практикăра ĕҫпе пурнăҫласа пырать. Ҫавăншăн ăна колхозниксем хисеплеҫҫĕ.

Ҫапла ялсенчи хăйсен кăмăлĕ туртнипе ĕҫлекен колхозник-агитаторсем масса хушшинче пысăк ҫитĕнӳсем тума пултараҫҫĕ, вĕсем кашни колхознике витĕр пĕлсе тăраҫҫĕ, колхозниксем патне пыма пĕлеҫҫĕ, колхозниксен кăмăлнешухăшне ҫавăрма пултараҫҫĕ, ҫакна пула вĕсене хăйсене те колхозниксен масси хисеплет. Гавриловăпа Рябчиков юлташсем халĕ ҫуракине хатĕрленес ĕҫе вĕҫлес тĕлĕшпе ĕҫлеҫҫĕ.

Пĕр артелĕн паха ĕҫĕсем

КАЛИНИНО. Ишлĕри «Новая сила» артельре вăрҫă пуҫланиччен вырăнти базарсенче сутмалама тунă урапа-ҫунасемсĕр пуҫне урăх нимĕнех те туса кăларман. Отечественнăй аслă вăрҫă вăхăтĕнче артелĕн производстви чылай анлăланчĕ.

Иртнĕ ҫулти ноябрь уйăхĕнче артель членĕсем фронт валли йĕлтĕрсем тума задани илнĕ. Йĕлтĕр туса кăларасси вĕсемшĕн ҫĕнĕ ĕҫ пулнă. Йĕлтĕр тăвакан мастер тата станоксемпе хатĕрсем кирлĕ пулнă. Анчах артель правленинче ĕҫлекен юлташсем аптăраса тăман. Тепĕр темиҫе кунран йĕлтĕрсем туса кăларакан цех организациленĕ. Ватă мастер А. Иванов юлташ ҫамрăк рабочисемпе пĕрле йĕлтĕрсем тума тытăннă, халĕ артель лайăх пахалăхлă йĕлтĕрсем туса кăларать.

Артелĕн 1942 ҫулти 1-мĕш кварталта 1000 кубометр вутă хатĕрлесе сутмалла пулнă. Вăрман ĕҫĕнче ĕҫлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Рабочисем пĕр ҫыннăн икĕ ҫыннăн ĕҫлеме кирлине те ăнланса илнĕ. Стахановец И. Иванов юлташ кулленхи ĕҫ нормине 150—200 процент таран тултарса пынă. Вăл хăйне панă март уйăхĕнчи задание 150 процент тултарнă. Вăрман турттарма фронта кайнă арҫынсем вырăнне хĕрсем тăчĕҫ. Н. Васильева, Е. Филиппова юлташсем кулленхи нормăсене ирттерсе тултараҫҫĕ.

Иртнĕ виҫĕ уйăх хушшинче артель членĕсем 1.200 пуртă аври, 750 юр хырмалли кĕреҫе туса кăларнă. Вĕсенчен чылайĕшне фронта ярса панă, ыттисене ялпосен лавкисем урлă вырăнти базарсенче сутнă. Ҫав хушăрах 115 ҫуна, 90 мăшăр ҫуна тупанĕ, 376 пĕкĕ, 100 мăшăр урапа тукунĕ туса хатĕрленĕ.

— Тăвас тесен темĕн те тума пулать, —теҫҫĕ артель членĕсем. Нумаях пулмасть артеле тепĕр васкавлă задани панă. Халиччен курман та туман ĕҫ чылай шухăшлаттарма пултарнă. Ку ĕҫе организацилессине тепĕр ватă мастер Михаил Фадеев хăй ҫине илнĕ. Виҫĕ кунран вăл кирлĕ детале ҫавăрма станок шухăшласа тунă. Фадеев юлташ хăй тунă станокпа халĕ ҫав детальсене чиперех туса кăларать. Ҫавналлах мастер Михаил Васильев юлташ та тупăсем авмалли станок кăлах шутласа тунă. Вăл хăй тунă станокпа 50 мăшăр ытла тукун авса хатĕрлерĕ.

Артельре ҫăва тухсан ҫĕнĕ цехсем организацилеҫҫĕ. Вăл цехсенчен пĕри катка-пичкесем тума пуҫăнать. Халĕ вĕсене тума строй материалсем хатĕрлеҫҫĕ. Унсăр пуҫне чашăк-тирĕксем туса кăларакан цех пулать.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Ялхуҫалăхĕ валли ҫĕнĕ специалистсем

Нумаях пулмасть чăвашсен ялхуҫалăх институчĕ ҫĕнĕ специалистсем вĕрентсе кăларчĕ. Пурĕ 45 ҫын институт пĕтерсе тухрĕҫ. Вĕсенчен чылайĕшсем государственнăй экзаменсене «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе тытрĕҫ. Гришин, Цветкова, Арзамасов, Шигильчев, Плотникова тата Ильин студентсем отличниксен дипломне илчĕҫ.

Институт пĕтерникенчен хăшпĕрисем ĕҫлеме Омск, Новосибирск облаҫĕсене, Алтай крайне, Казахстана каяҫҫĕ, нумайĕшĕсем Чăваш республикине юлаҫҫĕ. Института срокчĕнех пĕтернĕ Арзамасов юлташ Красноармейски МТС-ĕн политотдел начальникĕ пулса ĕҫлет, Шигильчев юлташа МТС директорне лартнă.

Ялхуҫалăх институтĕнчи профессорсемпе преподавательсем ҫĕнĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе мухтава тивĕҫлĕ ĕҫлеҫҫĕ. Уйрăмăнах Найденовпа Пельцих профессорсем пĕтĕм вăя, пултарулăха хурса ĕҫленине палăртмалла.

Ăмăртура

ВĂРНАР. Районри колхозсем иртнĕ ҫул тĕштырăсен, техникăллă культурăсен тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн продуктивноҫне чылай ӳстерчĕҫ. Мĕнпур ĕҫре социализмлă ăмăрту хĕрсе пычĕ. Ҫĕнĕ Атлашри «Волга» колхоз иртнĕ 1941 ҫулта Кĕҫĕн Кипекри «Память Ленина» колхозпа ăмăртса ĕҫлерĕ. Ҫак кунсенче ăмăрту итогĕсене пĕтĕҫтерсе ҫакна палăртнă. Агротехника правилисене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăҫа кĕртсе пынипе ăмăртса ĕҫленĕ икĕ колхозĕ те тырпул тухăҫне ӳстерес тĕлĕшпе 1941 ҫулти плана ытлашшипех пурнăҫланă. «Волга» колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 1?-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Кунта кашни ĕҫкунĕ пуҫне 4-шар килограма яхăн тĕштырă тивĕҫнĕ. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене срокчĕнех тата пысăк пахалăхлă тырăпа татнă.

Кĕҫĕн Кипекри «Память Ленина» колхоз выльăх-чĕрлĕхсен хисепне тата вĕсен продуктивноҫне Ҫĕнĕ Атлаш колхозĕнчен те ытларах ӳстернĕ. Кунта фермăсен заведующийĕ пулса ҫамрăк хĕрача А. Арсентьева питĕ те хастарлăн ĕҫлет.

— Тăван ҫĕршыв тата, пуринчен ытла, Хĕрлĕ Ҫар валли выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах кирлине эпир лайăх пĕлетпĕр. Кашни ĕнене, сурăха, сыснана лайăх пăхса ҫитĕнтерессишĕн, вĕсенчен пысăкрах тупăш илессишĕн тăрăшса ĕҫлетпĕр,—тет вăл. Иртнĕ ҫулта выльăх-чĕрлĕх фермисем колхоза 25.077 тенкĕлĕх тупăш панă. Фермăсенчи М. Филипповăпа А. Иванова юлташсем икшер ҫын вырăнĕнче ĕҫлеҫҫĕ пу сан та, хăйсен тĕп ĕҫне лайăх туса пыраҫҫĕ. Кашни сăвакан ĕнерен иртнĕ ҫул 1462-шер литр сĕт суса илнĕ, кашни ама сыснаран вăтам шутпа 17-шер ҫăвăр илнĕ.

Хăшпĕр бригадăсемпе звеносем социализмлă ăмăртăва тухса татах та пысăкрах ҫитĕнӳсем тунă. «Память Ленина» колхозри ?-мĕш бригада (бригадирĕ К. Николаев) кашни гектартанах 17-шер центнер ытла тĕштырă туса илнĕ. 4-мĕш бригада та пысăк ҫитĕнӳсем тунă. Кунта колхозниксем мĕнпур хастарлăхпа ĕҫлеҫҫĕ. М. Порфирьев колхозникăн ҫемьинче ĕҫлекенсем виҫĕн. Вĕсем иртнĕ ҫулта 1037 ĕҫкунĕ тунă, Порфирьевăн хăйĕн 450 ĕҫкунĕ. Колхоз производствинче те, хуҫалăха ертсе пырас ĕҫре те уйрăмах хĕрарăмсем хастарлăн ĕҫлеҫҫĕ. Т. Васильева юлташ ертсе пыракан махорка лартса тăвакан бригада ăмăртура пур ĕҫсемпе те мала тухрĕ.

— Социализмлă ăмăртура,—тет Ҫĕнĕ Атлаш колхоз председателĕ И. Семенов,—эпир Кĕҫĕн Кипексенчен мала тухрăмăр. Ăмăрту пире лайăх ĕҫлеме, ĕҫе чун-чĕререн парăнса тума вĕрентрĕ.

Халĕ ăмăртса ĕҫлекен колхозсем ҫуракине хĕрӳллĕн хатĕрленеҫҫĕ. Кăҫалхи ҫуракине татах та ăнăҫлăнрах ирттерессишĕн тăрăшаҫҫĕ. Анчах та ҫуракине хатĕрленес ĕҫре вĕсен ҫитменлĕхсем те чылай-ха. Вĕсене ҫак кунсенчех пĕтерсе ҫуракине тухма хатĕрленсе ҫитмелле.

Паянхи куна уйхирсене тислĕк кăларас ĕҫ, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухса хатĕрлес ĕҫ кая юлса пырать. Кĕҫĕн Кипек колхозĕн фекали нумайрах хатĕрлеме пур майсем те пур. Учрежденисем, шкул, ялсовечĕ, почта вырнаҫнă вырăнсенче удобрени ҫителĕклех, вăл уйхирсене питех те кирлĕ. Выльăх-чĕрлĕхсен килкартишĕнче юр айĕнчен тухса пыракан тислĕк те ҫаплипех выртать. Ăна та уя кăлармалла.

Ҫуракине тухас вăхăт ҫывхарса килет. Социализмлă ăмăртăва татах ытларах чĕртсе, ҫуракине тухма хатĕрленсе ҫитиччен тепĕр хут пăхса тухмалла. Туса ҫитермен ĕҫсене халех тума тăрăшмалла.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

ҪĔНĔ ЗАЕМА ĂНĂҪЛĂН ВЫРНАҪТАРАССИШĔН

Совет государстви кăларнă заемсем хуҫалăха вăйлатма, культурăна ӳстерме тата оборонăна тĕреклетме каяҫҫĕ. Пирĕн ĕҫҫыннисем вĕсене хапăл туса йышăнаҫҫĕ тата ҫулран ҫул ытларах ҫырăнаҫҫĕ. Ку вăл иртнĕ ҫулсенчи заемсене Чăваш республикинче сарнинчен те аванах курăнать. Пирĕн республикăри ĕҫҫыннисем Виҫҫĕмĕш Пятилеткăн Заемĕсене 1938 ҫулта 13.763.000 тенкĕлĕх, 1939 ҫулта 17.188.000 тенкĕлĕх, 1940 ҫулта 20.916 000 тенкĕлĕх ҫырăннă пулсан, 1941 ҫулта 24.818.000 тенкĕлĕх ҫырăнчĕҫ. Иртнĕ ҫулта Виҫҫĕмĕш Пятилеткăн (тăваттăмĕш ҫулхи кăларăм) Заемне сарасси пысăк ăнăҫлăхпа тата кĕске вăхăтра пулса иртрĕ. Хĕрлĕ Чутай, Калинински районсем, сăмахран, заема пĕр кун хушшинче, Ишлей, Тăвай, Йĕпреҫ, Комсомольски тата Красноармейски районĕсем икĕ кун хушшинче сарса ҫитернĕ. Республикипе илсен, заем сарас ĕҫе 10—12 кун хушшинче вĕҫленĕ. Заем укҫине пухасси те иртнĕ ҫулта хăвăртрах та лайăхрах пулса пычĕ. Ăна ҫак тĕслĕхсенчен те курма пулать. 1940 ҫулта 18 кун хушшинче пухнă суммăна (1088 пин тенкĕ) 1941 ҫулта заем сарнă вăхăтри малтанхи кунрах пухса ҫитернĕ. Унсăр пуҫне 1941 ҫулта ялти ĕҫҫыннисем заем укҫине тӳлени 1940 ҫултинчен 2.077.000 тенкĕ ытларах пулнă.

Виҫҫĕмĕш Пятилеткăн (тăваттăмĕш ҫулхи кăларăм) Заемне сарас тата унăн укҫине пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах Чкалов(?) Вăрмар районĕсем лайăх ĕҫлерĕҫ. Вĕсем заем сарас ĕҫе малтанах [illegible] хатĕрленсе, ăна 3—4 кун хушшинче тата йĕркеллĕ ирттерчĕҫ, заем [illegible] малтанхи суммине пĕрттечакарман.

Заем кампанине ăнăҫлăн вĕҫлес тĕлĕшпе, ҫавăн пекех, Шăхасан, Сĕнтĕр. Шăмăршă районĕсем те начар мар ĕҫлерĕҫ.

Анчах та республикăра иртнĕ ҫулти заем ĕҫĕнче ҫитменлĕхсем те пулчĕҫ. Вĕсенчен чи пысăкки вăл — хăшпĕр районсем заем кампанине тивĕҫлипе кĕтсе илменни. Элĕк районĕ ялсоветсенчи заем уполномоченнăйĕсене вăхăтра тупса ҫитереймерĕ. Кайран ҫак ĕҫе васкавлă ирттернĕ пирки заем уполномоченнăйĕсем вырăнне юрăхсăр ҫынсем лекнисем пулнă.

Иртнĕ ҫулта тата тепĕр ҫитменлĕх — заем ҫырăнас ĕҫе пурне те явăҫтарманни тата заем ҫырăннин малтанхи суммине чакарса яни пулчĕ.

Массăллă ăнлантару ĕҫне ҫителĕксĕр туса пынине пула, республикăри хăшпĕр предприятисенче заем ҫырăнас ĕҫе пурте мар хутшăннă. Канашри вагонсем юсакан заводра заем ҫырăнмасăр 200 рабочи юлнă. Ҫавăнпа заводра ĕҫлекенсем хушшинче заем сарнин сумми вĕсен уйăхри ĕҫукҫи фончĕн 63 процентĕ чухлĕ ҫеҫ пулнă. Куславкка комбинатĕнче, райпромкомбинатра ĕҫлекенсем те иртнĕ ҫул заема ҫителĕксĕр ҫырăннă.

Чылай районсемпе предприятисенче тата заем ҫырăннин малтанхи суммине чакарса янă, ĕҫе ҫĕнĕрен кĕнĕ рабочисемпе служащисене заем ҫырăнтармасăр хăварнă. Заема ҫырăннин малтанхи сумми чакни уйрăмăнах колхозниксемпе единоличниксем енĕпе пысăк.

Иртнĕ ҫулти заем кампанийĕнче пулнă ҫак ҫитменлĕхсене кăҫал шута илес пулать, вĕсене урăх тăвас пулмасть.

Пирĕн государство халĕ ҫĕнĕ заем—1942 ҫулти военнăй заема кăларчĕ. Вăл заем иртнĕ ҫулти заемсенчен чылай енĕпе уйăрăлса тăрать. Унăн укҫи отечественнăй вăрҫа пула тухакан тăкаксене витме каять. Ҫавăнпа та государствăн 1942 ҫулти военнăй заемĕ Совет Правительствин оборонăллă пысăк мероприятийĕ пулса тăрать.

Ҫĕнĕ заем икĕ кăларăмран—выигрышлă тата процентлă кăларăмсенчен тăвать.

Заемăн выигрышлă кăларăмне хуласенче тата ялсенче пурăнакан халăхсем хушшинче сарма палăртнă. Процентлă кăларăмне колхозсемпе кустарлă-промысла артелĕсенче кăна сармалла.

Заема халăх хушшинче сарасси: «Виҫĕ-тăватă эрнери ĕҫукҫине государствăна кивҫен парар!» текен лозунгпа иртсе пырĕ. Иккĕленмелли ҫук, чылай рабочисем, служащисем тата колхозниксем, ҫĕнĕ заем мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине тата вăл мĕнле усă кӳнине шута илсе, ăна хăйсен уйăхри ĕҫукҫинчен ытларах та ҫырăнĕҫ. Ҫапах та ҫакна асра тытас пулать: заем сарас ĕҫĕн пĕтĕмĕшле ăнăҫлăхне уйрăм ҫынсем пысăк суммăлăх ҫырăнни мар, вăл ĕҫе пурте хутшăнни, рабочисем, служащисем, колхозниксем—пурте 3—4 эрнери ĕҫукҫи чухлĕ ҫырăнни татса парать. Заема уйăхри ĕҫукҫи чухлĕ тата ытларах та ҫырăннин примерĕсене те анлăн сарса пырас пулать.

Предприятисемпе учрежденисенче заема ҫырăнасси, иртнĕ ҫулсенчи пекех комсодсем урлă, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче ялсовет ҫумĕнчи уполномоченнăйсем урлă пулса пымалла. Заем укҫине тӳлеме 10 уйăхлăх срок параҫҫĕ. Рабочисемпе служащисем заем укҫин малтанхи тӳлевне 1942 ҫулти апрелĕн иккĕмĕш ҫурринчи ĕҫукҫинчен, юлашки тӳлевне 1943 ҫулти февралĕн пĕррремĕш ҫуррингчи ĕҫукҫинчен тӳлеҫҫĕ.

Ялсенче заем сарассин тĕп задачи, колхозниксем хушшинче заем ҫырăнассине малалла ӳстерсе пынипе пĕрлех, заем укҫине срокчĕн пухасси пулса тăрать. Кăҫал, заем укҫине хăвăртрах пухма пулать. Малта пыракан колхозниксем заем укҫине срокчĕнех тӳленин примерĕсемпе усă курса, ялсенче укҫана заем сарнă вăхăтра ытларах пухма тăрăшмалла.

Заем укҫине срокчĕнех массăллăн тӳлемелле тăвас тĕлĕшпе нимĕнле организациллĕ мероприятисем те ирттерме кирлĕ мар. Уйрăм рабочисемпе служащисем заем укҫине срокчĕн тӳлесси вĕсен хăйсен ирĕкĕпе ҫеҫ пулса пымалла.

Государствăн 1942 ҫулти вăрҫă заемне ялхуҫалăх, промысла артелĕсенче сармалла. Вĕсем, ҫулте каланă пек, процентлă кăларăмăн облигацийĕсене ҫеҫ илеҫҫĕ. Заем ҫырăнас ĕҫе мĕнпур ялхуҫалăх артелĕсен, кустарлă-промысла артелĕсен, пулă тытакан колхозсен промысла тата ялхуҫалăх ĕҫĕсене хутăшуллă тăвакан артельсен, инвалидсемпе вăрман кооперацийĕсен артелĕсен хутшăнмалла.

Нумай миллионлă, хăватлă совет халăхĕ хăйĕн правительствин кашни мероприятине ырласа саламлать, вĕсене пурнăҫа кĕртме хастарлăн пулăшать. Нимĕн иккĕленмелли те ҫук, ҫĕнĕ заема та пысăк ăнăҫлăхпа тата кĕске срокра вырнаҫтарса ҫитерĕпĕр.

Ф. СЕМЕНОВ.
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

е сиенленĕ, противникăн пехотине 2 батальона çити çапласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противника хирĕç активлăн çапăçса, пирĕн чаçсем Ленинград фрончĕн уйăрăм участокĕсенче икĕ кун хушшинче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Артиллерирен персе тата разведка тăвакан группăсем кĕрешсе противникăн 22 дзотне çĕмĕрнĕ тата 6 танкне, 10 орудине, 44 пулеметне, 30 ытла минометне пĕтерсе тăкнă, трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра 4 оруди, 10 пулемет, минометсем, автоматсем, винтовкăсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем нумай.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче çирĕплетнĕ пунктшăн пынă çапăçура пирĕн подразделени нимĕçсен 2 орудине тата миномет батарейине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 105 çынна вĕлернĕ. Противникран 3 оруди, 5 станковăй пулемет тата 6 миномет тытса илнĕ. Пирĕн боецсем пăшалсемпе пулеметсенчен персе нимĕçсен пĕр самолетне ÿкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче кĕрешекен пирĕн стрелковăй часть икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсен пехоти, танксем тата артиллери пулăшса пынипе, темиçе хутчен те пирĕн позицисем çине контратака туса кĕме хăтланнă. Пур контратакăсене те, хăш чухне алăвĕççĕн тытăçса çапăçни патнех çитнĕскерсене, противника пысăк çухалусем кÿрсе сирсе янă. Артиллерирен персе нимĕçсен 5 танкне сиенленĕ.

* * *

Пушкин юлташ командир пулса ертсе пыракан танковăй часть (Кăнтăр фрончĕ) икĕ уйăх хушшинче нимĕçсене 23 танк, 60 оруди тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 3000 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Разведчик Попов сержант (Калинин фрончĕ) тăшманăн тылĕнче пĕр пĕчĕк çул пĕррине пытанса ларнă. Разведчик часах 13 гитлеровец пынине курнă. Попов юлташ çавсене хăй патне 10 метра çити çывхартнă та автоматран персе пурне те пĕтерсе тăкнă. Кăштах вăхăт иртсен тата 8 нимĕç пырса çитнĕ. Попов юлташ вĕсене те пĕтерсе тăкнă. Кăштах малалла куçса, Попов юлташ тата мĕн пуласса чăтăмлăн кĕтсе ларнă. Çулпа çав вырăналла пĕр взвод хÿтĕлесе пыракан 14 лавлă обоз куçнă. Çав обоз разведчикпа танашсанах, вăл 4 граната вăркăнтарнă та пăтрашу вăхăтĕнче усă курса, пытех те хăвăрт хуçран çухалнă.

* * *

Орел облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен С. юлташ ертсе пыракан отрячĕ нумаях пулмасть нимĕç чаçĕ пыракан çул çинче засада организациленĕ. Командир сигналĕ тăрăх, отряд боецĕсем гитлеровецсем çине пăшалсемпе пулеметсенчен пеме тытăннă. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлернĕ. Партизансем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: пĕр оруди, 4 ручной пулемет, 60 винтовка, 3 автомат, 400 снаряд, 7.000 патрон.

* * *

Нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Карл Дейбель çапла каласа панă: «Пирĕн ротăна продовольстви паман, вăл çимелли хăйне валли хăй тупса пыгнĕ. Тырă, выльăх-чĕрлĕх хресченсенчен туртса илнĕ. Унсăр пуçне тата салтаксем ушкăнĕ-ушкăнĕпе тата пĕччен-пĕччен те хресченсене çаратнă, чăх-чĕп, сыснасем, ĕнесем тата мĕн тĕл пулнă ăна—пурне те сĕтĕрнĕ. Продуктсем кăна илмен, тĕрлĕрен япаласем те туртса илнĕ: тумтир, тирсем, çăматă, çĕлĕксем. Нумаях пулмасть эпĕ Харьковра пултăм. Хулара пур магазинсене те хупса лартнă, нимĕнле те тупса илме çук. Халăх выçă пурăнать. Эпĕ унта темĕн чухлех çынсене çакса вĕлермеллисене куртăм. Центри урамсенче балконсем çинче, çавăн пекех тата хула тулашĕнче те çакса вĕлернĕ çынсен виллисем нумайччен çакăнса тăраççĕ. Хулара час-часах пушарсем тухаççĕ. Пĕлсе тытма çук çынсем нимĕçсен çар учрежденийĕсем тата çар чаçĕсем йышăнса тăракан çуртсене, казармăсене вут тивертеççĕ, взрыв туса сирпĕнтерсе яраççĕ. Пирĕн салтаксем Германи çĕнтерессине шанми пулса пыраççĕ. Хамăр юлташсен телейсĕр опытĕнчен эпир çакна лайăххăнах чухласа илтĕмĕр: кунта юлнă нимĕç пĕрне те вилĕмрен хăтăлса юлаймĕ».

* * *

Норвеги çыранĕсенче Мольде хули çывăхĕнче Норвеги патриочĕсен групни нимĕçсен пĕр пысăк моторлă лодкине ярса илнĕ, çавăн чухне вĕсем 5 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Норвежецсем лодка çинчи 2 пулемета тата боеприпассене илнĕ те лодкине шыва путарнă. Çав районрах нумаях пулмасть пушар тухнипе нимĕçсен бензин склачĕ çунса кайнă.

Апрелĕн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Михайлов юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардейски чаçри танкистсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) противникăн контратакине сирсе ярса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă тата противникăн 2 танкне тивертсе сиенленĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Черепанов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть пĕр кун хушшинче белофинсен 19 дзочĕпе блиндажне тата 4 наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ. Пирĕн артиллери пенипе противникăн артиллерийĕн 13 батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарса лартнă. Белофинсен салтакĕсемпе офицерĕсене 350 çынна вĕлернĕ тата амантнă.

* * *

Каçхине нимĕçсен ÿсĕр салтакĕсем пĕр ротăна яхăн Семенов сержант отделенийĕ хÿтĕлесе тăракан рубеж çине (Хĕвеланăç фрончĕ) атака туса кĕрсе кайма хăтланнă. Чуданов красноармеец, гитлеровецсем кĕске дистанцие çывхариччен кĕтсе тăнă та ручной пулеметран пеме тытăннă. Ытти боецсем Чуданова пулăшса винтовкăсенчен пеме пуçланă. Нимĕçсем чăтса тăма пултарайман, каялла чакса кайнă. Тул çутălма пуçласан отделени командирĕ çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 100 яхăн виллине шутласа кăларнă.

* * *

Лазарев лейтенантăн танковăй подразделенийĕ Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противникăн тĕрекленĕ пунктне атакăланă. Пирĕн танкистсем тăшманăн 2 дзотне çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен 5 танкне тата противникăн пехотине 3 взвода çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Румынсен 93-мĕш пехотнăй полкĕнчи 3-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак—Иосиф Бантяру çапла каласа кăтартнă: «Январь уйăхĕнче эпĕ тăван ялта пултăм. Бухарестри вокзалта çĕршер тата çынсемпе хĕрарăмсем санитарнăй поездсене хирĕç тухса кĕтсе илеççĕ, вĕсем аманнă салтаксемпе тăм илнипе суранланнă салтаксем хушшинче хăйсен тăванĕсене шыраççĕ. Нумайĕшĕ йĕреççĕ, Румыни правительствине темтепĕр каласа ятлаççĕ. Килте манăн нимĕн те çук. Арăм эпĕ киле çитнĕ вăхăтра пĕр талăк çăкăрсăр тата укçасăр ларатчĕ. Вăл ăçта пултарнă, çавăнтан кивçен илнĕ. Ялти çынсене фронтра нумайĕшне вĕлернĕ е амантнă. Манран пур хресченсем те вăрçă хăçан пĕтетши тесе ыйтатчĕç.

Каялла фронта килнĕ чух эпĕ тыткăна парăнмашкăн çирĕп шухăшласа хутăм. Юлашки çапăçура, красноармеецсем пирĕн позицисем патне çывхарсанах, эпĕ алăсене çĕклерĕм. Çакна рота командирĕ Мицу лейтенант курнă та ман çине икĕ хутчен пеçĕ, анчах та тивертеймерĕ».

* * *

Гитлерла мерзавецсем Харьков облаçĕн оккупациленĕ районĕсенчи мирлĕ халăха тискер кайăксем пек хăрушла асап кăтартаççĕ. Огиевка ялĕнче нимĕçсем 18 çынна персе пăрахнă, вĕсем хушшинче темиçе пĕчĕк ача. Ватă хресчен Емельян Авксентьевич Бугач хăйне персе вĕлерме илсе кайнă чухне ялти çынсене çапла чĕнсе каланă: «Ывăлăмăрсем, соколсем, хĕрĕмĕрсем, фашистла çĕлен-калтасене пĕр шеллемесĕр çапăр. Вырăс халăхне нимле те çĕнтерме пултараймасть»,—тенĕ. Сахновщинăра нимĕç палачĕсем вырăнти 200 çынна ытла персе пăрахнă.

* * *

Италире итальянец салтаксемпе нимĕç салтакĕсем хушшинче час-часах тытăçусем пулма пуçланă. Нимĕç салтакĕсем хăйсене кунта çĕнтерсе илнĕ çĕршыври пекех тытаççĕ. Нумаях пулмасть, Авеллино хулин (Италия) урамĕсенчен пĕринче ÿсĕр нимĕçсем пĕр итальянец салтака нимĕçсен унтер-офицерне честь паманшăн хĕнесе тăкнă. Пуçланса кайнă тытăçура итальянец салтаксен хутне кĕрсе вырăнти çынсем те çапăçăва кĕрсе кайнă. 7 гитлеровеца йывăр амантнă. Урамра пухăннă халăх хушшинчен: «Нимĕçсене Италирен хăваласа кăларар!», «Шуйттан патне ярар Гитлерпа унăн салтакĕсене!» текен сасăсем илтĕннĕ.

Литвинов юлташ Филадельфире тухса каланă сăмах

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС). Филадельфире Америкăри политикăллă тата общественнăллă наукăсен академийĕн çулсерен пулса иртекен 46-мĕш конференцийĕ уçăлнă. Конференцире «Вăрçăра мĕнле çĕнтересси тата мир тăвасси çинчен» калакан пĕрлĕхлĕ те мăна сÿтсе-явнă çĕре паллă деятельсем нумайĕшĕсем хутшăнаççĕ.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче «Пĕрлешÿллĕ вăйсем» темăпа пулса иртнĕ сессире сăмах тухса каласа, Литвинов юлташ уйрăммăнах çакăн çинче чарăнса тăнă:

Пулас историксем çакнашкал ыйту лартĕç: мĕншĕн хăшпĕр правительствăсен ответлă руководителĕсем гитлеризмăн программипе тĕллевĕсем нумай çĕршывсен никама пăхăнманлăхне хăратса тăни çинчен тата çав программăпа тĕллевсем уйрăм халăхсене пуçĕпех тураласа кĕртсе ÿкерме хапсăнни çинчен пĕлсе тăнă пулин те, хăйсен çĕршывĕсене хÿтĕлеме хатĕрленсе çитмен, агрессин жертвисем пулса тăнă çĕршывсен вăйĕсене пĕрлештерес тĕлĕшпе нимĕн те туман?

Гитлеризм аталанса пынин чи малтанхи тапхăрĕнчен пуçласах, Гитлер этемлĕхе валли хатĕрлекен катастрофăна сирсе ярас тесе, совет правительстви нумай çĕршывсен вăйĕсене пухма, пĕрлештерме кирлине ăнланса илнĕ. Нумай çулсем хушши совет правительстви коллективлă хăрушсăрлăх туса хума ывăнма пĕлмесĕр чĕннĕ. Çав вăхăтрах совет правительстви хăйĕн тĕйĕсем валли материальнăй база туса хатĕрлесе пынă. Совет правительстви тем пек тÿрĕ кăмăллăн çине тăрса тăрăшнă пулин те, юлашкинчен унăн çакна ăнланса илме лекнĕ: хăйсем тĕллĕн пурăнакан ытти правительствăсен гитлеризма хирĕç пĕрлĕхлĕ активлă фронт туса хума чăннипех тăрăшни çук. Ытти çĕршывсем хăйсен вăйĕсене пĕрлештерес шухăш патне каялла таврăниччен чылай малтан Гитлер хăйĕн программине туллин пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Хальхи вăхăтра та пĕтĕмĕшлĕ хăрушлăха хирĕç татăклă кĕрешÿ организацилеме чи малтан мĕн кирлине пур çĕрте те тĕпĕ-йĕрĕпех ăнланса илнине эпĕ шансах каймастăп.

Тинчен хальхи вăрçинче тĕнчĕл держависене хирĕç кĕрешекен çĕршывсем хăйсен пурнăçĕшĕн кĕрешеççĕ. Вăрçăра поражени тÿсни çав çĕршывсемшĕн хăйсен территорийĕ пĕчĕкленнине кăна мар пĕлтерĕ пулĕччĕ, çакăнпа пĕрлех тата вĕсем хăйсен политикăпа экономика тĕлĕшĕнчен никама пăхăнманлăхне пуçĕпех çухатассине, çав çĕршывсен халăхĕсем чуралăха кĕрсе ÿкессине, тăшманла пачах ют идеологие парăнассине, вĕсен историллĕ традицийĕсем пăрахăçа тухассине, хăйсен ĕненĕвĕпе шухăш-кăмăлĕсем, хăйсен политикăллă тата обществăллă идеалĕсем пăрахăçа тухассине, кашни нацишĕн, кучухнехи цивилизацин шухăш-кăмăлĕпе ÿссе çитĕннĕ кашни çыншăн чи паха пулса тăракан япаласем пăрахăçа тухассине пĕлтернĕ пулĕччĕ.

Иртнĕ вăрçăсем питех те нумай вăй ыйтнă пулсан, хальхи вăрçă гитлеризма хирĕç кĕрешекен çĕршывсенчен хăйсен мĕнпур вăйĕсене хума, чи пысăк жертвăсем тума ыйтать. Патриотизм çинчен, нациллĕ чыслăхпа ăнланулăх çинчен, ирĕклĕх çинчен, пĕтĕм тĕнчери халăхсен туслăхĕпе цивилизаци çинчен ăнланман çынсем, завоевательсенчен квислингсен постчĕсене илме ĕмĕтленекен çынсем—палачсемпе тюремщиксем, хăйсен халăхĕсенех пусмăрлакансем, 5-мĕш колоннăра шутланса тăракан çынсем, пĕр çакнашкал çынсем кăна çав çĕршывсенче пĕрле вăй хурса пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç кĕрешме кирлине сирсе яма пултараççĕ. Эпĕ представитель пулса тăракан çĕршывра унашкал çынсене нимĕн те итлесе тăмаççĕ, эпĕ çакăн çинчен калама пултарнипе телейлĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем Гитлера хирĕç пурте пĕр çын пек кĕрешĕве тухрĕç. Совет халăхĕ çак вăрçăра нимĕнле жертва умĕнче те чарăнса тăмасть. Противникăн тылĕнче совет çыннисем партизанла вăрçăн тактикине çĕнетсе малалла аталантарса ячĕç.

Çавăн пекех противник та вăйлă-ха. Влаçа хăй аллине тытса илнĕренпех Гитлер хăйĕн халăхĕ валли вăрçăллă режим туса хунă, çапла мирлĕ пурнăçа юрататакан çĕршывсен çар вăй-хăватĕнчен иртсе каякан вăрçă машини туса хурас тесе, Гитлер нимĕç халăхĕн мĕнпур вăйĕсемпе сĕткенĕсене ултă çул хушши ĕмсе пурăнчĕ. Гитлер хăй çĕнтерсе илнĕ çĕршывсенчи мĕнпур промышленноçа тата пĕртаварсене хăй аллине тытса илчĕ тата хăйĕн вăрçăри нушисене тивĕçтерсе пымашкăн нумай халăхсене ĕçлеттерме тытăнчĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ уйрăмăн илнĕ кирек мĕнле государствăн вăйĕсем те, вĕсене тем пек нумай пухсан та, Гитлера татăклăчах çĕнтерме çителĕксĕр пулнă пулĕччĕç. Гитлера хирĕç чăннипех кĕрешме пултаракан государствăсен вăйĕсене пухса пĕрлештерни, чăннипех пухса пĕрлештерни кирлĕ. Çав вăйсем халлĕхе нумайăшĕсем тем çине шанса кĕтсе тăраççĕ пулĕ тесе шикленетĕп эпĕ.

Гитлера хирĕç кĕрешекен çĕршывсем мĕн тери пысăк вăй хунине тата вĕсен малашне те нумай вăй хума лекессине эпир манмастпăр. Англия Хĕрлĕ Çара туслăн материальнăй пулăшу панине тата халĕ те парса пынине эпир мĕнпур чĕререн хаклатпăр. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсем вăрçа хутшăниччĕнех пире чылай пулăшу панине тата халĕ те парса пынине эпир мĕнпур чун-чĕререн хаклатпăр. Совет халăхĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен çар материалĕсем тиенĕ пароходсем килни çинчен пĕлет Америка халăхне хĕрÿллĕн тав тăвать. Çавăн пекех ытти çĕршывсем, халлĕхе кĕрешÿрен тухса ÿкнĕскерсем, вăй хуни çинчен те эпир манмастпăр.

Анчах та халĕ пĕр-пĕрне мухтав юррисем юрласа ларма е призсем валеçсе ларма вăхăт мар. Пĕрлешнĕ вăйсене тивĕçлĕ пĕртен-пĕр награда вăл,—Гитлера тата унăн тарçисене пуçĕпех çĕнтерни пулса тăрать. Анчах та çавнашкал çĕнтерĕве ăна халĕ те организацилени кирлĕ-ха. Çав çĕнтерÿ патне пымалли çулсене халлĕхе эпир пыратпăр кăна-ха. Çав çула пĕрлешнĕ вăйсемпе тупни питех те паха. Пирĕн умра тăракан проблемăсене пурнăçа кĕртес ĕçе пуриншĕн те паллă пулса тăракан çакнашкал япаласенчен пуçламалла: 1) Гитлера пĕтерсе тăкмасăр çĕнтерÿ тума çук; 2) Германие хирĕç блокада тунипе е Германи хулисем çине бомбăсем пăрахнипе кăна Гитлера пĕтерсе тăкма çук; çакна ăна çапăçу хирĕнче çеç татса пама пулать; 3) çапăçусен тĕп уйĕ хирĕ хальхи вăхăтра Совет Союзĕ пулса тăрать, унта Германин нумайрахĕш дивизийĕсем тата унăн тарçисен дивизийĕсем тăраççĕ, тата çав дивизисене пухасси малалла та пулса пырать; 4) çав дивизисене çĕнтерме тата пĕтерсе тăкма май пуррине Хĕрлĕ Çар кăтартса панă; 5) Гитлера пуçĕпех çапса аркатса пĕтерсе тăкас ĕç Совет Союзĕпе Англирен пĕрле вăй хурса кĕрешме тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчен çĕнĕрен пулăшу пама ыйтать.

Пĕрлешнĕ çĕршывсем кĕрешекен нумай фронтсем хушшинче, паллах, çывăх вăхăтра çĕнтерÿ тăвассине кĕтме май çук фронтсем те чылай, çав фронтсенче ăнăçсăрлăхсем те пулма пултараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ пĕр фронт çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, çав фронтра пĕрлешнĕ вăйсен пысăк çитĕнÿ тума лайăх шанчăксем пур, çав çитĕнÿ ытти районсенчи çитменлĕхсене те ытлашшипех витме пултарнă пулĕччĕ. Çакă вăл пĕрлешнĕ çĕршывсене хавхалантарнă çĕрте тата тĕнĕл держависен шухăш-кăмăлĕсене хавшатнă çĕрте кăна мар, Гитлерăн малашнехи планĕсене—нейтральнăй юлнă юлашки çĕршывсене хăй енне çавăрмалли планĕсене аркатса тăкнă çĕрте те çавтери пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çитес çывăх вăхăтрах пире хăш вырăнта — совет фрончĕн çурçĕр секторĕнче-и е кăнтăрти секторта пырса çапать — вăл пире, е Турцие, Швецие, Испание, Кипра е Мальтăна хирĕç пырса çапать, — çакăн çинчен эпир чухлама кăна пултаратпăр. Анчах Гитлера та шухăшлаттарма вăхăт мар-ши пирĕн: унăн противникĕсем ăна малашне хăш енчен пырса çапасси çинчен, вĕсем хăйсен войскисене континентăн хăш пайĕнче антарасси çинчен шухăшлаттарма вăхăт мар-ши ăна?

Акă мĕншĕн кирлĕ ĕнтĕ пире вăйсене пĕрлештерни, сăмахпа пĕрлештерни мар, ÿлĕм пĕрлештерни мар, халĕ, паян пĕрлештерни кирлĕ. Эпĕ çакăн пек паллă тĕллевпе пĕрлештересси çинчен калатăп: Гитлера çапса аркатма ăçта май пур, пирĕн хамăрăн вăйсене пĕртен-пĕр çав фронтра пĕрлештермелле.

Пирĕн тĕллев пĕр çĕнтерÿ тунипех ăлпланса тăма пултараймасть. Вăйсене пĕрлештерни пире фашистла йывăça, унăн наркăмăшла çимĕçĕсемпе пĕрле тĕпĕ-тымарĕпех, татăклăнах тăпăлтарса пăрахма кирлĕ. Вăйсене çавăн пек пĕрлештерни этемлĕхĕн суранĕсене сиплесе сыватма, мĕнпур тĕнчери экономикăллă тата политикăллă пулас отношенисем валли çĕнĕ никĕс туса хума кирлĕ. Хальхи вăхăтра хамăрăн вăйсене мĕн тери çăмăлрах тата хăвăртрах пĕрлештерме пултаратпăр, кĕрешĕве хутшăнакансем кашни мĕн чухлĕ пĕр пек жертвăсем тÿссе пыратпăр, пĕрлештернĕ вăйсемпе туслăхпа килĕшÿлĕх çинче никĕсленсе тăракан чăн-чăн мире çавăн чухлĕ ăнăçлăрах туса хума пулать.

Англи авиацийĕ Çурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла Англи авиацийĕ Çурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапăннă.

ФРАНЦИРИ ВЫÇЛĂХ

ЖЕНЕВА, апрелĕн 12-мĕш. (ТАСС) Швейцарире тухса тăракан «Газет де Лозанн» ятлă хаçат çырнă тăрăх, Виши правительстви çакна йышăннă: çĕнĕ тырăччен Францие çăкăр пĕçерме 5.000.000 центнер тырă çитмест. Çак тырра мĕнле майпа та пулин тупаймасан. Франци халăхĕн тырă вырма пуçлас умĕн пĕр уйăх çурă хушши пачах те çăкăр çимесĕр пурăнас пулать. Правительство хатĕрленĕ тыррăн пур пек, çук пек запасне мĕнле те пулин вăрăмрах вăхăта тăсас шутпа çăкăр памалли ахаль те пĕчĕк нормăна татах чакарма хатĕрленет, норма тăрăх пĕр куншăн халь унсăр та çын пуçне 100—150 грамран ытла тивмест. Анчах та апла хăтлансан та çăкăр лару-тăрăвĕ хăрушлăхран тухасси курăнмасть, мĕншĕн тесен Гитлерăн оккупациллĕ влаçĕсем Францин хальхи запас тыррринчен çак çывăх кунсенче татах та 5.000.000 центнер Германие Францин тыткăна лекнĕ çыннисене усрама кирлĕ тесе илсе кайма шутлаççĕ.

ИТАЛИРЕ ИНФЛЯЦИ ПУÇЛАНСА КАЙНĂ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 1[illegible]-мĕш. (ТАСС). «Форейн корреспондент» бюллетень çапла çырать: лирăн хакĕ питех те вăйлăн ÿксе пынине кура Италири халăх паникăна ерсе хăвăртрах тавар илсе хума пикеннĕ. Правительство халăха лир хакĕ пирки ĕнентерме хăтланни путланса ларнă. Çавăн пекех тата Муссолини банксен директорĕсен пухăвĕнче тухса калани те никама та лăплантарма пултарайман. Финанс тĕлĕшпе ĕçлекен официальнăй органсем тата Итали пичечĕ те инфляци çинчен уççăнах каласа çырать. Бюллетеньре çырнă тăрăх, хресченсем корпорацисене ялхуçалăх продукчĕсем тăратма çаплах килĕшмеççĕ.

Испанири гитлеровецсем хушшинчи харкашу

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 10-мĕш. (ТАСС). Америка пичечĕн корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Испанири выçлăх, террор тата гитлеровецсем хуçаланни Испани çĕршывне нимĕçсене сутнă Суньер ушкăнĕнчи фалангистсен руководителĕсен предателле политикине хирĕç пыракан движение хальхинчен хирĕчен темиçе хут ытларах вăйлатса янă. Тарăху граждăн вăрçи вăхăтĕнче Франко енче тăрса кĕрешнĕ сылтăмри организацисен речĕсенче те палăрса пуçланă. Пуринчен ытла рекетистсем, монархистсем тата католиксем тарăхса кайнă.

Вĕсем анчах мар, фалангистсен партийĕн хăйĕн речĕсенче те оппозициллĕ движени ÿссе пырать. Фалангистсен организацийĕсенче чылайĕшĕнче Гитлер майлă политикăшăн тăракансемпе Гитлера хирĕçле тăракансем хушшинче çирĕп тытăçусемех пулса иртеççĕ. Алавăра (Наварра) фалангистсен организацине пĕтĕмĕшпех салатса янă. Çав организацин пухăвĕнче чăн-чăн çапăçăвах пуçланса кайнă. Çапăçу вăрçăн малашнехи ĕçĕсем пирки пынă тавлашуран тухса кайнă. Баракальдора (Бильбао) фалангистсен ушкăнĕ вырăнти металлурги завочĕсенче ĕçлекен нимĕç специалисчĕсене хĕнесе тăкнă. Ла-Коруньяра фалангистсен вăрттăн ĕçлекен организацине тупнă. Ку организаци Германие хирĕçле листовкăсем салатас ĕçе йĕркелесе пынă.

Ассошиэйтед пресс агентствин Мадридри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер Суньера фалангистсен партине халех вăйлăн тасатмашкăн тытăнма хушнă. Çав майпа ĕнтĕ фалангистсен партийĕн руководстви пĕр миллион экземпляр партин çĕнĕ член кĕнекисене хатĕрлеме хушнă. Çав член кĕнекисене фалангистсен партине тасатса тухнă хыççăн фалангистсене пама хатĕрлеççĕ.

—o—

КĔСКЕН

● Де Голль генералăн тинĕс-çар вăйĕсен Канадăри представителĕ Кедрю çапла пĕлтернĕ: Адмирал Обуанона ирĕклĕ Францин тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ пулма уйăрса лартнă.

● Францин оккупацилемен зонинче полици репрессийĕсем вăйланса пыраççĕ. Лионри Сен-Поль тĕрмине, 250 çын вырнаçтармалăх тунăскерне, халĕ 900 çын хупса лартнă.

● Польшăн телеграф агентстви Польшăри судсем Гродзискра — 5 çынна, Быгдошра — 1 çынна, Познаньре — 2 çынна, Грауденцра — 1 çынна, Гдыньра — 1 çынна, Холмра — 2 çынна вĕлермелле туса приговорсем йышăнни çинчен пĕлтерет.

● Кейптаунри докене гранитпа çирĕплетсе витме Англия 750.000 кĕрепенке стерлинг панă. Çав ĕçе туса пĕтерме мĕнпурĕ 2.000.000 кĕрепенке стерлинга ларать.

„Пионер Чувашии“ танк тума

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Кĕçĕн Çĕрпÿелĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Етĕрнери çамрăк патриотсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, «Пионер Чувашии» танк тума 490 тенкĕ укçа пухрĕç. Вăл шутран кĕçĕн классенче вĕренекен Л. Ильин, Р. Акчурина, А. Орешкина, Косолапова, Щетинкина, В. Макаров пионерсем 10—1[illegible] пер тенкĕ пачĕç.

Н. КИРИЛЛОВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри шкулсенче «Пионер Чувашии» танк тума укçа пухас ĕç сарăлсах пырать. Бичуринори вăтам шкул коллективĕ танк тума 415 тенкĕ, Кутемерти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 230 тенкĕ пухнă.

В. ВЛАДИМИРОВ.

* * *

СЕНТЕР. Кунти вăтам шкулта вĕренекенсемпе вĕрентекенсем, Етĕрне хулинчи пионерсен чĕнĕвĕ çине ответлесе, «Пионер Чувашии» танк тума 1500 тенкĕ укçа, 560 килограмм тимĕр-тăмăр пухса пачĕç.

Ф. ЯНДУШКИН.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Мăн Шетмĕ вăтам шкулта вĕренекенсем «Пионер Чувашии» танк тунă çĕре 580 тенкĕ укçа хыврĕç.

Н. ИВАНОВ.

—O—

ХАЙСЕН ПУРНĂÇНЕ СТРАХЛАÇÇĔ

ИШЛЕЙ. Район центрĕнчи 13 организацин коллективĕ хăйсен пурнăçне пурĕ 211 пин тенкĕлĕх ирĕклĕн страхланă. Вăл шутран райфо работникĕсем — 46 пин, райзо работникĕсем—36 пин, машинно-тракторнăй станцинчи рабочисемпе служащисем — 30 пин тенкĕлĕх страхланă.

З. МИТРОФАНОВА.

—O—

СЕРГО ОРДЖОНИКИДЗЕ ОБРАЗĔ—ЧĂВАШ СЦЕНИ ÇИНЧЕ

Чăвашсен академиллĕ театрĕ Г. Мдивани çырнă «Приказ по фронту» пьесăна чăвашла лартса пама хатĕрленет. Пьесăра Серго Орджоникидзе 1919 çулти июль уйăхĕнче Хĕвеланăç фронтĕнче интервентсене хирĕç наступлени тăвас ĕçе организациленине кăтартса панă.

Серго Орджоникидзе рольне ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов вылять, унăн арăмĕ Зинаида Гавриловна рольне — Е. Андреевăпа Р. Иванова, артисткăсем ылмашса выляççĕ, Павлик рольне— М. Иванова, Бядуляна—А. Ургалкин, Николаева — В. Михайлов, Лалаева — Г. Фадеев, Захара — Л. Семенов т. ыт. те выляççĕ.

Спектакле театрăн художествăллă руководителĕ Л. Н. Родионов лартать; çĕнĕ декорацисене Архангельский çырать. Пьесăна кăтартма май уйăхĕн малтанхи кунĕсем тĕлне хатĕрлесе çитермелле.

Ил-ус.

СУД

Санитари правилисене пăхăнманшăн

Предприятисенче, пÿрт-çуртсенче, общежитисенче, мунчасенче, чугунçул вокзалĕсенче тата ытти вырăнсенче те санитарипе тасалăх правилисене çирĕп тытасси хальхи вăхăтра пуриншĕн те пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Анчах та пирĕн уйрăм килхуçисем хушшинче çеç мар, хăшпĕр предприятисемпе обществăллă организацисен руководителĕсем те санитари правилисене пăхăнмаççĕ.

Асăрхаттарнă хыççăн та санитари правилисене пăхăнман çынсене администраци йĕркипе айăпламалла килет.

Хусан чугунçулĕн Канаш станцинчи коммунальнăй хуçалăх отделĕн начальникĕ пулнă Атлашкин, Канаш станци вокзалĕн начальникĕ Гавриков, вокзал начальникĕн заместителĕ вокзалри аслă дежурнăй — Игнатьев, чугунçул вокзалĕнче тата чугунçул тăрăхĕнчи обществăллă çуртсемпе вĕсен таврашĕнче тасалăх тытман. Хăйсене темиçе хутчен асăрхаттарнă пулин те, вĕсем санитари правилисене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшман, станципе вокзал таврашĕнчи тасамарлăха хирĕç кĕрешес ĕçе тивĕçлипе туса пыман. Çакăн пирки Канаш районĕнчи прокуратура Атлашкина, Гаврикова тата Игнатьева айăпласа суда памалла тунă.

Çак кунсенче Канашри халăх сучĕ асăннă çынсен ĕçĕсене пăхса тухса, Атлашкина — пĕр çул та ултă уйăхлăха хупса лартмалла, Гаврикова пĕр çулталăк тÿрлетмелли ĕçе ямалла тата Игнатьева пĕр çулталăк хушши ирĕксĕр ĕçлеттерсе пурăнмалла тунă.

Çакăнпа пĕрлех Канашри вагонсем юсакан заводри коммунальнăй хуçалăх уйрăмĕн начальникне Барышева рабочисемпе служащисен общежитийĕсене таса тытманшăн, Канаш хулинчи мунча заведующине Карасева мунчара санпропускникпе дезокамерăна вăхăтра юсаса ĕçе ямманшăн прокуратура айăпласа суда памалла тунă.

НИМĔÇ ЗАХВАТЧИКĔСЕН ТЫЛĔНЧЕ ЛĂПКĂ МАР

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд моринг пост» хаçат çапла пĕлтерет: Германири радио йышăннă тăрăх, Венгрире чылай вырăнсенче диверсиллĕ пысăк ĕçсем пулса иртнĕ. Çав майпа Венгри патриочĕсене нумайĕшне арестленĕ, вĕсем патĕнче взрыв туса сирпĕнтерме кирлĕ япаласем нумай тупнă.

ЖЕНЕВА, апрелĕн 11-мĕш. (ТАСС). Гавас-ОФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бухарестра çар трибуналĕ 15—19 çулти лицеистсене 5 çамрăка суд тунă. Вĕсене «сиенлĕ политика енĕпе ĕçленĕшĕн» айăпласа 10 çултан пуçласа 15 çула çитиччен тĕрмене хупса лартмалла тунă.

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Бельгире юлашки виçĕ уйăх хушшинче чугунçулсем çинче 125 диверсирен кая мар туса, паровозсемпе çĕршер вагон пĕтерсе тăкнă.

Малтанхи тираж

3-мĕш пятилетка (4-мĕш çулхи кăларăм) заемĕн подписчикĕсем юлашки взноса тÿлесе татрĕç. Облигацисемшĕн тÿлемелли укçана пĕтĕмпех парса татнă. Пĕрремĕш тираж июнĕн 25-мĕшĕнче пулать. Çав числачченпур предприятисем те, учрежденисем те, перекет кассисем те облигацисене подписчиксене алла валеçсе парса пĕтермелле. (ТАСС)

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ
главные и старшие бухгалтера для работы на периферии и ст. бухгалтера-ревизоры для работы в г. Чебоксарах.
Обращаться: гор. Чебоксары, ул. 15 лет Комсомола, д. № 2, к тов. Честнокову.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа партин пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1042

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 5. 58 64 п: м: